Михаил СУНТАЛ

# *ЧУН КĔНЕКИ*

сăвăсем

ШУПАШКАР 2009

ББК К84. 09(Чув)6-51
УДК 8(471.344)
С 91

Михаил СУНТАЛ.
ЧУН КĔНЕКИ. Сăвăсем. – Шупашкар, 2009. – 133 с.

Михаил Сунталăн кун кĕнекинчен илнĕ сăвăсем унăн кулленхи пурăнăçне сăнласа параççĕ. Автор биографийĕ тĕрлĕ паллă пулăмсемпе мар, чун вылявĕпе палăрса тăрать. Çавăнпа та сăвăçăн пурнăçĕ вăл – чун пурнăçĕ: чун таçта ăнтăлни, хурланнии-савăнни тата теме ĕмĕтленни, çавăнпа та ку сăвăсен ярăмне «Чун кĕнеки» тенĕ те.

ББК К84. 09(Чув)6-51
УДК 8(471.344)
М. СУНТАЛ, 2009

* * *

Çул хĕрринче пĕринче
Пĕр çын, тен, таркăн
Пăрахнă хăварнă чĕрине.
Вăл выртнă пулĕ нумай çул-çул...
Иртен-çӳрен: «Ку, – тенĕ, – чул!»
Эпĕ, айван, куртăм ахах...
Эпĕ çав чула пытартăм,
Хура тăпрапа хупларăм,
Ăшă куçпа пăхрăм, куççуль тăкрăм...
Кунĕн-çĕрĕн куççуль юхтарсан,
Хура куçăм татах хуралсан,
Вăл тепĕр хут калт! турĕ.
Чĕре – тымар, тымар – туна,
Туна – çеçке кăларчĕ...
Çавна эпĕ куртăм. Халĕ
Чĕре хаваслăн хускалнă пек
Сывламасăр тăратăп...
Çул хĕрринче тупрăм чул-чечек,
Чĕреллĕ пултăм пек.

* * *

Çурхи тĕнчере пур икĕ çанталăк:
Пĕри урамра курăнать пăрлă майлă,
Тепри кăкăрта, ман ӳт-пӳ ăшĕнче
Куçа курăнмасăр тăрать пулмалла...
Ик тĕрлĕ çанталăк: пĕр-тепĕр чухне
Вĕсем хирĕçеççĕ йытпа кушакла.
Паян та çаплаччĕ, ирпе çăмăл марччĕ,
Çулсем те ларсаччĕ хытса пылчăкпа...
Тен, çавăнпа та эп хыт тарăхаттăм,
Утаттăм пăхса та ыр мар кăмăлпа.
Унтан иртсе кайрĕ пуль вăхăт пĕр авăк...

Хĕвел сиксе тухнă пек пулчĕ кăна –
Темскер пулса иртрĕ – пĕр пĕтĕм çанталăк
Пăр пек ялтăрать халь тулта та ăшра!

* * *

Ирпе çут çанталăк вăраннă чухне
Тавралăх темле тĕлĕкре:
Шыв хĕррипе ӳссе ларнă хырсем
Ишеççĕ пек халĕ – чăн-чăн карапсем!
Çӳлтен вĕçсе иртнĕ чарлан та курать –
Вăл пулă пулать те, шыврах пурăнать...
Шыв çийĕ пит лăпкă. Вăл тĕкĕр майлах
Темле пурнăçа кăтартать чăнласах...
Сасартăк пĕр ăвăс, – сив çил те çукрах, –
Сиксе чĕтреме тытăнать самантрах.
Пăшăл та пăшăл вăрман вăранать,
Шăпăл та шăпăл çулçă çупать.
Вăрман та çак кӳлĕ, çак ăвăс паян
Мана тем каласшăн пулас хăлхаран.
Ку ăвăс вĕрӳçĕ, ку ăвăс пĕлет:
Ман пурнăçăм, ăвăс, мĕнле-ши килет?
Килет те каять пуль... Е çак тĕнчере,
Каллех хăйне май тĕлленен кӳлĕре,
Тен, пулă пек ишĕп чарлан çулĕпе.
Е хыр пек... Карап пек, парăс карса,
Ишсе те çӳретĕп çилпе тайăлса...
Шăпланнă тĕнче пăхса тăрĕ вара!
Ку шухă ача сикетех авăра!
Пĕр кас шапăлтатĕ те шыв та лăпланĕ,
Шыв сыпнă пек тăрĕ хыр вăрманĕ...
Пĕр ăвăс кăна...

* * *

Сап-сарă кĕркуннен йăлийĕ –
Пĕр хурланас та йăлл! кулас.
Çитес кунсен пĕр-пĕр паллийĕ
Куçа час курăнмасть пулас?..

Вăл йывăç айĕнче выртатчĕ, –
Эс асăрхарăн ахаль мар!
Вăл ахаль çеç, ахаль туратчĕ,
Пĕр çулçăсăр та таса мар...

Тăм ӳкнĕ хыççăн чăтаймасăр
Типме пуçланă, курăнать.
Эс тăтăн пĕр шухăшламасăр:
Сан алăра – хура турат!

Кĕрхи хĕвел, тен, куçа шартрĕ?
Тен, эс чун кĕртрĕн ăрăм пек?
Сан алăри турат сасартăк
Папка кăларнă пулчĕ пек...

* * *

Вĕлтĕр-вĕлтĕр вĕçет кĕрт çинчи юр пĕрчи,
Тӳпере те пĕçернĕ сив хĕл икерчи.
Виç кĕтеслĕ пĕри, улт кĕтеслĕ тепри –
Ун пекки тĕнчере пур-ши халь чи хитри?
Акă вăл вĕçкелерĕ шур кĕрт çийĕпе,
Акă вăл пĕр сисмесĕр сив çил вăййĕпе
Пырса перĕннĕн пулчĕ ман ăшă пите...
Ма йĕпе-ха тесе, тĕлĕннипе
Шăлса илтĕм вара пите.

* * *

Тӳпере те тинĕс пулĕ?
Хумлăн-хумлăн пĕлĕт шурĕ.
Ахальтен тухмасть пуль хум
Тен, такам пăрахрĕ чул?..

Кайăк пек çунат сарасчĕ,
Хум çине ларса канасчĕ...
Хумсем хыççăн ярр! кайсассăн,
Телее таçта тупассăн...

Тӳпере пуль тепĕр тинĕс?
Хăш чухне вăл питĕ шухă!
Çак хула, тен, путнă кимĕ? –
Тĕпĕ тăрăх юшкăн юхрĕ...

Каçăртса пуçа тăратăп...
Пурпĕрех ишсе тухатăп!
Ярăнать çӳлте çут çăлтăр –
Ăмăрт эпĕ, е пĕр ăтăр?

* * *

Пăрланнă хура уçлăхра пĕр планета
Йăлт ванчĕ те ӳкрĕ çурхи çĕр çине.
Ун чух Çĕр-анне вăранса çитеймен те
Никам та курмарĕ вут чул çунине...

Çапла çунса ӳкрĕ тем чухлĕ чул ванчăк.
Выртатчĕç вĕсем сан ура айĕнче...
Тĕнче асанне пек курнатчĕ пит ватă,
Пурнаттăм-ха эп те çав чул шайĕнче...

Çавна пула пуль палласа илеймерĕн.
Ӳксеччĕ çӳлтен эп çак тĕле ĕнер каç.

Халь ёнтĕ мана тепĕр хут чĕм кĕртеймĕн...
Выртап – ĕнсе кайнă... Хуп-хура та яка.

Анчах эс курсассăн манра урăх пурнăç,
Çав чул варрине пухса хунă кăвар
Чăлтах сиксе ӳкĕ çав тер вĕри хумлăн –
Вара, тен, тăватпăр пĕрле пĕр кавар?

Вара эс мана чун илли евĕр вирлĕн
Чуп тăвăн пĕр вĕçсĕр хум пек ăнтăхса.
Кайран, ывăнсан, чĕре çумне илĕн,
Эп выртăп унта ача евĕр кулса...

Енчен те манпа выляса тăрансассăн,
Эс ывăт мана тинĕсе пусĕпех.
Шывра, ан хăра, пит хăвăрт путмастăп,
Шыв çийĕн эп кайăп ача сиккипе...

Унтан лăп çеç ӳкĕп. Эп выртăп нумай.
Хăçан та пулин пайланать çак планета
Пĕр ванчăкĕ ӳкĕ таçта тепĕр май...
Пĕр хĕр асăрхать пулинех çав чул та!..

* * *

Çу кунĕ кăçал сулхăнпа тулса килчĕ:
Сив çумăр та çурĕ, типĕ те тăчĕ...
Тен, çавăнпа чунăм вилчĕ?
Халь ёнтĕ, тен, вăл та качă-мăчăн
Выртать шапарса çырма тĕпĕнче?
Сип-сивĕ, йĕпе те тата тăварлă –
Тытса та курсаччĕ тахçан ал çинче!
Пулсаччĕ ун чух ал тупанĕ суранлă.
Тен, халь те çапла ал тупанлă çанталăк
Темле чире кайнă пекех сунаслать...

Ман чунăм та пулĕ, апла, çав чул май-
лă
Выртать çĕр çинче тĕшĕ май тăранса...
Унтан ӳссе кайнă темле çулçă евĕр
Вăл куçлĕ пире çырма тĕпĕнчен...
Мĕнле качă-мăчă ку, шурă, тейĕр,
Пырса пăхнă чух чул çине...
Вăл ĕнтĕ çав «качă» ытла та хытă,
Вăл ĕнтĕ ӳсет пуль ман чун тĕпĕнче?

* * *

Халĕ мана нимĕн те кирлĕ мар ĕнтĕ...
Пĕр хĕвелпе вăштăр çил кăна пулччăр çак ăшă ир.
Тата çул хĕрринчи пăру хӳри ятлă пĕр кăвак чечек.
Вăл асфальт çинех,
Известьпе сăрланă хӳме çумнех ӳссе ларнă.
Пăхсан-пăхсан, кăвак пĕлĕтеллех вĕçсе каятăн...
Унта, тӳпере, пирĕн ял çырминчи тĕпсĕр кӳлĕри пекех.
Хăрушă та савăклă!
Чĕре черчен чечеклĕ, çан-çурăм хыт хура ӳтлĕ...
Çăмăллăн та çĕкленӳллĕн утса пыратăп çав уçлăхра.
Çул тусанлă пулсан та малта темĕнле вăрттăнлăх, ĕмĕт...
Çав тусан çул çинче сан ура йĕррине шыратăп...
Шырасан-шырасан, тупатăпах пулĕ тетĕп.
Эсĕ те кашни ир çак асфальт сукмакпах иртетĕн вĕт-ха!

Пăру хӳри ятлă кăвак чечеке те кура-
тăн...

* * *

Пĕтрĕ çеçке çумăрпа тăкăнса.
Пĕтрĕ... Сарма кирлĕ марччĕ, апла!
Эп пĕлнĕ ăна, çапла пуласса...
Сарнă çеçке пек çунат çунасса...
Хурт пырса ларĕ, шырĕ, тен, пыл?..
Анчах сивĕре мĕн ĕнтĕ пур?
Юхрĕ куççуль пек çумăр кăна.
Юхрĕ те юхрĕ... Ăçта çавăнта
Чăтăн-ха ĕнтĕ çапла пурнăçа?
Пĕтрĕ çеçке татăлса çумăрпа.
Пĕтнĕ тесе, вăл выртмасть хуралса!
Шуррăн та шуррăн, тен, тепĕр чух
Кама та пулин илĕртет тепĕр хут?
Пĕтмен-ха, теме те, чăн та, пулать –
Çĕмĕрт çеçкиллĕ çул вăрттăн выртать.

* * *

Çак тĕнчене – вилме çуралнă?
Çуралсанах – вилме вĕрен!
Кам хуйхипе куçу хуралнă,
Кампа тата чĕрре кĕрен?
Çĕре ӳкернĕ чĕрене
Çӳле илсе татах çĕклен...
Кам лашине чарса тăварнă?
Инçе çула тухсан чăтар!
Пире ăсатнă ял çине
Пуçа çеç çавăрса пăхар.
Пыратпăр эпĕр каçа хирĕç –
Малта пыма пит çăмăл мар!
Чĕтретĕп эп, тапать сив тар...
Пулма эс тăрăш юнашар!

Пĕрле утатпăр çăлтăр витĕр!

* * *

Ĕнтĕ каять тĕнче, тайăлать
Пăрăнтăкран пăрăнтăка...
Айванах та ачи çул такăрлать:
Те çăтмаха, те тамăка?..

Ĕнтĕ туртать лаши, пуçне ухать,
Çулне утса тухас пек.
Çутăях та уйăх пит пăхать
Уя сурпан сарас пек.

Ĕнтĕ ӳсет йăмра, ватăлать,
Тымарĕпе çĕре хыпашлать.
Çамрăках та тусăм, таса чун,
Ăна лартнă çурхи кун.

Ĕнтĕ юрлать шăпчăк, вил ӳкет.
Ытла хыт юрататъ пуль?
Ай, çав юрă мана та тивет:
«Чăваш пĕтет!», – теет пуль...

* * *

Таçта аякра, тĕнчере, тахçанах
Пулса çакă пурнăç чăнах.
Çунать çут тӳпе. Çĕр – хура кĕл...
Кăвар чечексем тĕл-тĕл...
Çӳлте пĕр хăлат. Аялта – калта.
Ура айĕнче таптанать чĕр калча.
Таçта аякра ишĕлет чул чиркӳ...
Унта пухăнать-ха – хĕн-тертӳ!
Тытать кашнинех ват киремет,
Вĕлтрен урана вĕтĕлет...
Мăйра хура явлăк. Пĕвенет юнпа...

Ватти тем калать... Тулать çутăпа
Çак пăтăрмахлă тĕнче...
Мĕн кĕтет вĕçĕнче?
Тăраççĕ виççĕн. Выçă куçлă ачи...
Ачи аллинче юмахри йăвачи...
Вĕсем килсе тухрĕç ман пата,
Пĕрле илсе килчĕç темле хăвата –
Пĕтмен-ха чăваш авалхи авăрта!
Епле вĕсем виççĕш те чиста!
Вĕсен чунĕнчи çутта пуç çапатăп,
Çак пурнăç çинчен урăхла шухăшлатăп:
Чăваш чăтса тухнă хăруш самана
Каллех хупăрлать-ха сана та мана...
Ăна çĕнсе тух тап-таса!

* * *

Ман çăлтăр яланах çӳлте!..
Ача чухне те, çитĕнсен те
Кураттăм çăлтăр çунине –
Çăлтăр çăватчĕ каçхине!

Пит аякра йăлл-ял! çиçетчĕ,
Пăхаттăм питĕ тĕлĕнсе.
Анне хĕрес хурса илетчĕ:
«Çын чунĕ татăлчĕ», – тесе.

Такам шăпи – пĕррехинче –
Пĕр çăлтăр ӳкрĕ пуç çине.
«Пĕлтерĕр Çеçпĕл Мишшине!» –
Пĕр сассăр кăшкăртăм инçе.

Кам илтнĕ ăрăс сассине,
Кам курнă çăлтăр çунине?..
Тăкать тĕнче хăй çутине –

Пĕри ӳкет ман пуҫ ҫине!

* * *

Пĕр хам тĕллĕн пĕрмай шухăшланă:
«Ҫак ҫăва ҫинчи шурă чулсем
Мĕн майпа ҫĕр ҫинчен ҫухалнă? –
Ĕмрипех ларнă вĕт-ха вĕсем».
Каярах пĕринче эп те куртăм:
Пăлхарти пĕр чиркӳ айĕнче
Авалхи тăмхапа ҫырса хунă
Ҫын ятне пĕр чечче чул ҫине.
Вăл пулса чăн чăвашăн ячĕ,
Пулнă палăкĕ килĕ пек, тен?
Ах, анчах тепĕр тĕнĕн хăвачĕ
Илсе кайнă ăна ҫав тĕлтен.
Ун чухне те темех шутламанччĕ:
Пĕр ӳкерчĕк курсан, пĕтрĕм йăлт.
Пурнăҫра пур-мĕн чăнлăх саманчĕ –
Эс ăна курас мĕн-тĕк – чăт!
Пĕр купа ҫын шăмми... Хăрушă!
Пухăнса пĕр чиркӳ айĕнче.
Хытса тăтăм чул пек пĕр хушă,
Пултăм эп те купа тăрринче.
Мĕн-ма-ха мана та пĕтерчĕҫ
«Чăн Тура ĕненеп» текенсем?
Чул ҫинче ҫĕнĕ чиркĕ ҫĕклерĕҫ,
Тĕнчене тасататпăр тесех...
Эп вара чылайччен выртрăм
Тахҫан пĕтнĕ тăван хушшинче.
Шурă чул пулса хытă хытрăм –
Ҫак тĕнче – ҫавă чул ҫинче!

* * *

Пыраттăм эпĕ урампа
Тулли те ырă кăмăлпа.

Çынсем утатчĕç урлă-пирлĕ –
Çак пурнăçра вĕт тем те кирлĕ!
Пĕрне бутылка... Сĕт е çăкăр...
Тепри шутлать çӳлти çут çăлтăр...
Сив çил саватчĕ питĕме,
Асат хуçмастчĕ пĕвĕме...
Тулли те ырă кăмăлпа
Çӳреттĕм çав тем çăмăлпа
Тĕл пуличчен пĕр усалпа.
Мухтанчĕ-ши алри вăйпа,
Мана сасартăк тĕксе ячĕ,
Усал сăмах персе хăварчĕ...
Мĕн-ма ăна тытса ватмарăм,
Хуса çитсе пуçран çапмарăм –
Хытса çеç тăтăм çавăнта.
Эп тупрăм айăп хамăнта!
Мĕн-ма ăна эп çул памарăм,
Сума суса кăшт пуç таймарăм?
Тен, çырлахатчĕ çав усал,
Пулмастчĕ пулĕ ку «пасар»?
Пуç çапнипех пĕтмест-ха пыйтă,
Ырă тени те пултăр хытă!
Çынна хăраттăр пысăк чышкă...
Анчах малтан çапма тăхта,
Эс тăхăнтар хăвна нăхта!
Куççуль çăтан пулсассăн та,
Шăл шаккаса тăрсассăн та
Çӳлти çут çăлтăра шутла,
Пĕр-икĕ утăм çеç хутла,
Кĕрĕк арки хăть йăвала,
Аптранă кăвакал пек чăм –
Пăрахтăрах ăш-чикĕм «хăм».
Эп лаша мар та, пурпĕрех
Ват янаварпа пĕр пекрех...
Усал çинчен шав шухăшлатăп,

Хам кăмăла пĕрмай тăллатăп...

* * *

Эй, хула çыннисем, куртăр-и,
Хула çийĕн вĕçет пĕр тăри.
Ун сасси илтĕнмест те-и, тен?
Кăсăян вара, пур, тин-тин-тин!
Пур çерçи сассисем те тем чул –
Утнăçем, тăри евĕр эс пул!
Ун сасси, пит çӳлте те, аран
Çĕр çинче илтĕнет... Хура
Пăнчăн каять тӳпенех!..
Пач çухалчĕ тăри куçран.
Хĕвел çулĕ, тет, йывăр çул,
Турăсем те çунса темĕн чул...
Халь тăри те!.. Çерçилĕх кăна
Çул çинче лăплантарчĕ мана.
Çавă çеç. Çук пуль çав, тăри мар,
Хула çийĕн вĕçсе вăл курман.

* * *

Тин-тин! тăватчĕ кайăк,
Сăхатчĕ юр шывне.
Хăйне пĕр майлă палăк
Тухатчĕ куç умне.

Кун пеккине курманччĕ
Сив хĕл тăршшипеле.
Паян çут кун вăранчĕ
Хĕвел ăшшипеле.

Тен, çавăнпа тин-тин!, тет
Ман кăкăрта темскер.
Çав пĕр турат çинче те

Чĕре ларать пекех.

Чылай эп пăхса тăтăм
Çурхи кун илемне.
Çунат хушса та пăхрăм
Çав кăсăя çумне.

* * *

Ӳссе çитнĕ груша çеçке ăшĕнче...
Чĕкеçсем вĕçеççĕ пуринчен çӳлте!..
Унран чаплă каччă таврара çук пек
Шăпчăк чуп! тăвать те шăхăрать шик-шик!
«Шăхăрма пăрахăп, вăхăт иртtĕр», – тет.
Шăпчăк пек эп вăрттăн халĕ шухăшларăм,
Чĕрене тем тĕрлĕ пăрахса тултартăм.
Халĕ вăл, тен, груша? – çеçке тăкнă пек те
Симĕс çулçăн вĕттĕн чĕтренсе илет.
Те вăл халĕ шăпчăк – пытанса ларать пек.
Шухă каччă евĕр шăхăрать шик-шик!
Тен, чĕкеç пек пулчĕ – ик çунатне хучĕ,
Çĕр çине чул евĕр çапăнас пек ӳкрĕ.
Çук, çитмерĕ вăйĕ, пĕлĕт пуль ямарĕ –
Тепĕр хут çут евĕр çӳле чăмса тухрĕ.

* * *

Çурхи тӳпере, каçхи тӳпере
Çаврăнса çӳрет-çке пĕр чĕкеç.
Пĕр ӳкет çĕре, пĕр вĕçет çӳле,
Çуначĕ çинче те çут шевле...

Вĕçес çук текех, юрлас çук текех,

Ку кăвак тӳпе те илĕртместь.

Çурхи тӳпере чĕкеç чӳхенет,
Сасси илтĕнет-çке пит çинçе.
Мĕншĕн вĕçнине кам-ши халь пĕлет,
Кам илтет пулех сассине?..

Вĕçес çук текех, юрлас çук текех,
Ку кăвак тӳпе те илĕртмест.

Карниз айĕнче карнă пĕр пралук,
Халь пырса лармашкăн кăмăл çук.
Çурхи тӳпере, каçхи тӳпере
Çавранса çӳрет-çке пĕр чĕкеç...

Вĕçес çук текех, юрлас çук текех,
Ку кăвак тӳпе те илĕртмест.

* * *

Çӳлтен шăлса тăкнă çăлтăр тусанĕ
Шап-шур çивиттин витсе хучĕ пуçа.
Çав шурă тусан вăл ĕнтĕ вилмелĕх,
Çăлтăр çулне те маяк пек пĕлмелĕх.
Çăлтăр тусанĕ, мĕн-ма эс ӳкетĕн?
Çĕре те ӳксессĕн, вĕт ху та пĕтетĕн...

* * *

Юр хывса кайнă çул
Такăнтарать.
Тăман вĕçтерет,
Пĕтерет...
Тен, çавăнпа та пуль
Пурăнас килет?

* * *

Пĕчиккĕ чухнех пулă тытнă çĕрте
Çырма хĕрринче çӳрерĕм пĕрре...
Вут-кайăк, тет, аннă ĕнер ял çине!
Тупасчĕ-ха, тетĕп, çав кайăк тĕкне.
Çапла çӳресен-çӳресен пĕр тĕлте,
Чăнах та, эп тупрăм вут чул пеккине...
Тытса та пăхатăп кăкăр çумне,
Çулу пек туятăп пулас чĕреме...
Анчах та тем чухлĕ çапсан та вăр-вар,
Пулмарĕ манран чĕртесси вут-кăвар.
Епле ку пытанчăк вут-кайăк тесе,
Персе те хăвартăм ăна çӳлелле.
Вут чулĕ, чăнах та, пĕр вăхăт вĕçет те
Пĕр хĕм кăлармасăр ӳкет çĕр çине...
Çапла килсе тухрĕ... Вут кайăк тĕкне
Çырма тĕпĕнче тупаймарăм пĕрне те!
Çапах та пĕтмерĕм... Хур-кайăкăнне
Пуçтартăм мĕн кирлĕ таран шур тĕкне:
Çыран хĕррине пырса лартăм,
Шăхлич шăмăран ăсталарăм,
Çырма кĕввине каларăм...

## СĂВАР ÇИНЧЕН ХЫВНĂ ЮРĂ

Инçе çула тухма васкатăп,
Мĕн кирлине тупса хуратăп.
Хуратăп çăкăр, кашăк, пуртă...
Укçа вара çукрах та... суртăм.
Таçта Сăвар çĕршывĕнче,
Мăн асаттен тĕп килĕнче,
Çынпа пĕрле ларса-тăрсан,
Кăштах чунран, тен, калаçсан,
Тен, урăхла тухать-ха сурчăк,

Укçа та кирлĕ мар, тен, урăх?!
Асаттесен чăн-чăн мулне,
Вĕсен ăсне, вĕсен çулне
Ăша илсе утса тухас та,
Çак тĕнчене куçран пăхас та
Мĕн курнине йăлтах калас:
Çапла эпир, ак, сăварсем
Çӳретпĕр мар-и?.. Тĕнчесем
Пире курсан пит тĕлĕнеççĕ.
Ăçтан вĕсем, хăш çĕршывран,
Ун пек шеп халăха курман...
Епле хастар, епле пит ăслă, –
Тахçан, тет, вĕсене те пăснă!
Вĕсем çухалнă çĕр çинчен...
Ак халь вара ут кĕçĕнет,
Сăвар çĕр çийĕпе вĕçет...
Çула тухма ватти пиллет –
Вăл халăхăн çулне пĕлет!
Çапла çав вăл, сăвар тени,
Хăйне пĕр майлă халь те гени!
Вилсен те çĕр çинчех çӳрет.
Хăй шăпине вăл хăй çĕнет!..
Инçе çула тухма тăрсан,
Пĕрле илет çут çĕççине...
Пĕр татăк çăкăр, пысăк пуртă...
Ун, тен, апла, темле тĕллев пур?
Тăшман?.. Кунта, ак, пуртă! Кур!
Е тус?.. Туссем вали тупатпăр çăкăр,
Çапла сăварăн пурнăç пултăр!
Эй, самана! Эс тĕк тăрсан,
Эпир вăрçмасăр та пурнатпăр.
Сăвар çĕрне асра тытатпăр,
Ун хăватне ăша хыватпăр...
Çĕн çĕрсенче, кĕрешӳре
Туптаннă хурçăри пек пиçĕх

Пулма кирлех пирĕн ӳтре.
Эпир вĕт чухăн çуралман,
Çĕр ĕçĕнче телей туптанă,
Çынна çăкăр парса мухтаннă.
Япалине те сутнă чух
Парса мĕн ыйтнă хакпалах, –
Укçа, тесе тăман, паллах!
Çапла хăват пулса сăварăн,
Епле ăна манса хăварăн.
Кирлех пулать вăл çул çинче!
Калать хăй шухăшне тĕнче:
Сăвар хулийĕ пит инçе...
Эй-хай, унта час çитес çук,
Кайсассăн ирĕн-каçăн та...
Эй, темех мар, пĕр шутласан,
Çула тухсан, çулне тупан!
Пыратăп çухрăм шутласа,
Çитес тесен, çитен вара...
Ак вăхăт шурĕ, кун та иртрĕ,
Эпир кĕтни те чупса çитрĕ.
Куç умĕнче Сăвар хули!
Хули, хули те... Ним палли
Унта юлман пире валли.
Пур пĕр çавра темле пĕр уй –
Çавăн тавра тăрать те çуй!
Унта, кĕлленнĕ çĕр çинче,
Акса илеççĕ тырпулне...
Пăхма хăй чиперех ӳсет,
Тымарĕнче шур чул лекет.
Тымарĕнче тăм ванчăксем,
Шур шăмăсем... Хура çеç кăмрăк –
Çĕрме пĕлмеççĕ питĕ хăвăрт.
Мĕн пулнине, мĕн çуннине,
Çавна пăхса илетĕн те
Туятăн вăхăт çунатне –

Вăл çавăрать Сăвар енне!
Эпир утса пыран тĕлтех
Лартатпăр крепость виç енне.
Кунтах пулаççĕ çӳл валсем,
Юхса кĕреççĕ шыв-шурсем...
Вал тăрринче юман хӳме –
Пăхсан пулать кайса ӳкме!
Халь ĕнтĕ тăшманран тарса,
Килме пултарĕç хăраса,
Пур таврари ват карчăксем,
Мĕнпур хĕрарăм, ачисем...
Эпир вара, тăшман килсен,
Шала кĕртместпĕр, тем тесен те!
Анчах тăшман та ухмах мар,
Вăрçă майне пĕлет самай.
Вăл сăнă хыççăн сăн ывтать,
Сăнă вĕçне кăвар хурать.
Сăвар çунать!..
Хирĕç тăратчĕç-ха вĕсем,
Хĕçпе пулсан, нихçан çĕнеймĕн!
Анчах хăватлă кăвара
Епле хирĕç тăран вара...
Çунса каяççĕ шур çуртсем,
Çунса каяççĕ сар хĕрсем...
Ах, каччăсем выртаççĕ вилĕ –
Ăçта вĕсен халь ĕнтĕ килĕ?
Сăвар пĕрех-ха парăнмасть,
Вăл никамран та хăрамасть.
Алра çут хĕç, чунра Мăн Турă –
Ку таранччен мĕн чул ыр тунă!
Халь тин пĕтсен те вут çинче,
Ан пăрахсам пире, тĕнче!
Анчах тĕнче те тăшман майлă,
Ăна Сăвар тек кирлĕ мар...
Ӳкет çунса юман хӳме,

Тăшман сĕвет сăвар тирне,
Таптать утпа тырпул хирне...
Халь тин никам та тараймасть,
Сăвар тек ĕнтĕ тăраймасть!
Çĕр ĕçĕпе пурăнаймасть...
Çулсем иртеççĕ майĕпен...
Сăвар выртать пек... çав тĕлтех.
Эп шутласа, вăл кĕл пулса,
Юхса та кайнă пуль таçта...
Анчах мĕн-ма-ха çак уйра
Тырпул ӳсет вара çăра
Туни, пăхсан, темле пĕр сăнă.
Тĕпĕ темле сăвар пек сăнлă.
Апла, вăл халĕ те вилмен,
Çĕр ĕçĕнчен пĕрех писмен!..
Тырпул ӳсет çын евĕрех!
Ӳссе çитет те чиперех
Тăм савăт ванчăкĕ çине
Тыр вырнă чух пĕр-ик пĕрчи
Çĕре ӳкет чӳк тунă пек...

* * *

Чăвашăн пур пĕр чăн йăла.
Куçса килет пĕтĕм хула.
Куçса килет те пухăнать
Масар çине... Тăвансемпе
Вара лараççĕ темĕнччен,
Юмах яраççĕ майĕпен...
Аса илеççĕ... Асăнса
Ĕçсе парççĕ пĕр курка,
Ватти валли пай уйăрса,
Çиеççĕ çăкăр, çăмарта...
Ыйтаççĕ пил... Ватти пулсан,
Чăваш хăйне туять пуян.
Ватти пулсан эпир чылай –

Эпир пĕр çирĕм миллион!
Çеçенхиртен килет нухай–
Хĕçпе те ним те тăваймасть...
Эпир ларатпăр... Вил тăпри
Çĕр çийĕн çĕкленсе тăрать.
Пĕрин хыççăн тепри ӳсет –
Апла, вăй пирĕн хушăнать.

* * *

Уçăлса çӳрерĕм
Яла килнĕ май.
Урам, асăрхарăм,
Улшăннă самай.
Урамра тăратчĕ
Асатте йăмри.
Вăл пулса, тет, чаплă
Кил турри...

Халĕ вара çуккă
Ним йăмра палли.
Тункати çеç юлнă
Карчăксем валли.
Эп пăхса ларатăп
Тунката çинче.
Çаврасем, куратăп,
Темиçе...

Çуркунне ларатчĕ
Йăмра çеçкере.
Пыл хурчĕ сыратчĕ –
Тутлăччĕ сĕре!
Йăмра çеçки тутлă,
Анчах çуккă халь.
Пурăнни те пулчĕ
Тен, ахаль?..

* * *

Эй, пулса пуль эп таҫта та!
Эй, курса пуль темĕн те!
Пурпĕрех сана нихҫан та
Чĕререн яманччĕ-ха...

Акă, килтĕм, тăван ҫĕрĕм
Ҫупăрларĕ тăванла.
Санпала эп кунĕн-ҫĕрĕн
Ĕнтĕ хатĕр пурăнма...

Тĕлĕнсе пăхса иртетĕп
Ват йăмра та ҫумĕпе.
Чунтанах эп киленетĕп
Тăван ял илемĕпе.

Чăвашла халь шухăшлатăп,
Курăнатăп ҫын пекех.
Ҫавăнпа сăвă ҫыратăп,
Ват йăмра ҫулҫи пекрех...

* * *

Хĕл тăршшипех кун сивĕ тăчĕ.
Юлашкинчен, ак. пурнăҫ ăнчĕ.
Пĕрремĕш хут хĕвелĕм килчĕ –
Вăл хăй патне мана та илчĕ!
Унпа пĕрле эп халь ҫӳретĕп,
Хĕвел патнех, каллех, килетĕп...
Тен, ҫавăнтах пуль манăн килĕм?
Тен, ҫавăнтах тупатăп вилĕм?
Ҫунса кайсассăн Икар евĕр
Тепре вĕҫмелĕх тупăп тепĕр
Хăрах пулсан та пĕр ҫунат –
Ак, кур, епле вăл сарăлать!

Унпа пĕр-иккĕ çех суллатăп,
Çĕр çийĕн çĕкленсен, куратăп:
Ача пек Çĕр çиççе тăрать.
Пин-пин хула, уйпа вăрман –
Кун чухлĕ ырлăх эп курман!
Апла, каллех пулса тăрас-ха
Çак çĕр пекрех пĕр муклашка,
Сĕм уçлăхра кусса каяс-ха
Хĕвел тавра, хĕвел тавра...

* * *

Эпир килнĕ пулас çăлтăр витĕр,
Çав çула пирĕн чун ас тăвать.
Тен, вăл халь çавăнпа питĕ вирлĕ
Çăлтăрсем патнеллех туртăнать?

Çăлтăрсем тăкăнас пек тăрсассăн,
Чун темле хаваспа тулать.
Тӳперен çумăр евĕр тăксассăн,
Вăл вара вут пекех хыпать.

Кун килет те хĕвел питĕ вăйлă
Çăлтăра хăй айне пытарать.
Каçпала тепĕр хут питĕ вăрттăн
Çут тĕнче хăй сĕмне кăларать...

Çĕр пин тĕслĕ тӳпе пит ытарлăн
Ман çине вара ăшшăн пăхать...
Çут хĕвел айĕнче çухалсан та
Çăлтăр ман пуç çинчех тăрать!

* * *

Тӳпере çутăран çутă уйăх...
Çуккă пулĕ унта нимле хуйăх?
Çăлтăрсем çĕрĕпех вăйăра

Тем тăваççĕ çав уйăх тавра?
Эпĕ хам та çав уйăх пекрех,
Каччăсем те, тен, çăлтăрсемех...
Ак, пĕри, çывăхри куç хĕсет,
Пуринчен те ытла хыт çиçет.
Ах, анчах, тӳпере çав тĕнче,
Эп вара хамăр кил тĕлĕнче...
Ырă каç чĕрене кăтăклать...
Халь вара çывăрсан та юрать –
Ах, анчах, ырă каç кам сунать?..
Сунаканĕ савни аякра...
Ун сасси пурпĕрех хăлхара.
Куçĕ ун çакă çăлтăр пекрех,
Аякра та... пĕрех чиперех
Вăл курать пек çак пĕчĕк яла.
Çак киле... Çак хапха умĕнче
Вăл тăрсаччĕ манпа мĕн ирччен!
Иртрĕç пулĕ çав савăк кунсем?
Ун чухне вăл пулсаччĕ килме...
Такам пӳлчĕ пуль унăн çулне?
Çутă уйăх, эс манăн тăван,
Тĕнчери пур çула та куран.
Уйсем урлă сурпан сарса хур,
Савнине ман пата илсе кил...

* * *

Тинех, ак, тупрăм канлĕх чунăмра –
Пит чаплă кĕнеке пур ман умра.
Çавна халь вуласа пăхса ларатăп,
Çак тĕнчене йăлт урăхла куратăп:
Кунта ултав та, тĕрĕсмарлăх та...
Ырăпала усал çӳреççĕ çавтăнса,
Пĕр курăнса, пĕр пытанса...
Çак пӳлĕмре анчах çăтмах,
Кунта анчах хуçаланать юмах.

Асамçă пек туятăп эп хама та.
Чун ыйтнине тупатăп тем тусан та!
Тупатăп чăвашсен çулне-йĕрне!
Ăçта тăкса хăварнă куççульне,
Шăп çавăнта шыратăп чăн çулне.
Таçтан пит аякран, хĕвел енчен
Куçса килсе вĕсем Атăл çине.
Шур Атăлпа Мăн Атăл хушшинчи
Çĕр кăвапи пуçтарнă вĕсене.

* * *

Каллех ман кăкăра уçать-ха уçă сывлăш.
Куçа уçма та халăм çук чухне
Калать пекех анне: «Эс, ывлăм!
Килсе çак тĕнчене асап мĕнне пĕлме...
Ăна чăтса та ирттерсессĕн çитĕн
Чăн юрату патне те, акă, майĕпен.
Эс ыттисем пек пурăн ытлăн-çитлĕн.
Мĕн çитмесен, çырлах Тур панипе»
Кунсем иртеççĕ... Иртнĕçем хываççĕ
Эпир пулман çĕрте çап-çут çулсем.
Çав çулсемпе ман инçене каясчĕ.
Анчах мана валли пӳрмен пуль çав вĕсем?
Çӳренĕ эп, пĕр çӳремен те мар.
Шыранă та – телейĕм тупăнман.
Паян каллех, туятăп, ман шăпам
Темле çулпа илсе каять кунтан...

* * *

Сар хĕвел анăça анса ларчĕ.
Тĕттĕмленчĕ тавралăх кăштах.
Савнă тусăмшăн чун тунсăхларĕ –
Миçе каç ĕнтĕ вăл тунсăхлать?

Эп ăна çĕрĕпех пулĕ кĕтрĕм.
Ак, пуçларĕ те тул çутăлма.
Эпĕ кĕтнĕ пекех пырса кĕчĕ,
Тӳпери çăлтăр пек курăнса...

Вăл хăйне тыткалать пит сăпайлă.
Йăл кулса калаçать манпала.
Çавăнпа та ăна хама майлă
Çавăратăп-ха çут çăлтăрла!

Ак сана манăн вĕчĕхнĕ чунăм!
Пĕçертсе те илсен мĕн тăван?
Эп сана юратса та çуннăн
Сар хĕвел те нихçан çунман!

Кил часрах ман пата, савнă тусăм!
Ма манран ютшăнса эс тăран?
Эп юрланă хаваслă юрă
Янăрать эп юратнă таран...

### Пушкинран куçарни

Çӳретĕп-и эп халăх хушшинче,
Пулатăп-и кăштах ăш ыйхăра?
Вилĕм çинчен пĕр шухăш пуç çинче.
Пĕрмай манпа вăл, ман çумра...
Çав шухăшпа эп ирттеретĕп
Кашни куна, кашни çула...
Çул иртнĕçем пĕлес-ха тетĕп,
Хăш çулсенче вилес пулать?
Ăçта кĕтсе илет-ши вилĕм?
Çул çӳревре е вăрçăра?
Е пулĕ сивĕ виле килĕ
Çак çывăхри пĕр айлăмра?
Виле пек туйăмсăр юлсассăн,

Кирек ăçта выртма юрать.
Çапах та тăванра пулсассăн,
Эп лайăххрах пуль çывăрап?
Вĕр-çĕнĕ пурăнăç вылятăр
Вара çав вил тăпри çинче.
Ёмĕр иртсен те пурăнмалăх
Тăкайтăр илемне тĕнче…

* * *

Чăваш ачи пирки шутлатăп...
Шăпи тĕтреллĕн курăнать.
Кăшт, чăваш пек, тăрса юлсан та
Хăйне пĕрех вăл пăрахать.
Мĕн-ма тесен тĕнче пит аслă,
Пĕрех хăйне пăхăнтарать.
Шăлне йерсе тăран усал та
Ак, пур енчен час хупăрлать...
Чăваш ачи, тĕнче паллийĕ,
Эсĕ пĕтсен те мĕн юлать?
Тен, çавăнпа чĕре тымарĕ
Йăлтах сана валли тапать.

* * *

Кĕтетĕп эп,
Пĕлместĕп, мĕн кĕтетĕп?
Кĕтмен çĕртен килсе çапать
Шăпа, тен, тип аçа пек çак самант.
Е юхтарать пĕр тапхăр шалкăм çумăр?..

Кĕтетĕп эп,
Пĕлместĕп, мĕн кĕтетĕп?
Манран вăл аслăрах та ăслăрах.
Эп çамрăк, эп айван... Анчах
Унпа пĕрле чухне туятăп Ева евĕр.

Вăл тур ачи пек, тап-таса... Вăл килнĕ
Хăй халăхне Тур хушнипе çăлма.
Кĕтетĕп эп,
Пĕлместĕп, мĕн кĕтетĕп?

* * *

И. Яковлева асăнса

Чăвашшăн ĕçлесе ун чунĕ тухрĕ.
Ун пулчĕ юлашки сăмах – «Тавах!»
Вăл кайсанах тĕнче, чăнах та, хухрĕ.
Вăй илĕ-ши, ку паллă мар пачах!
Вăл Турă пек, чăнах та, килчĕ.
Эп ас тăвап ăна: ача чухнех,
Чăн юмăç пек, юна чарма пĕлетчĕ,
Çын шăпине курса тăратчĕ пĕтĕмпех!
Христос пек пĕлнĕ хăй шăпине те, ахăр,
Çапах пĕр шеллемесĕр вăхăта
Ĕçленĕ, шаннă çитессе çĕн тапхăр:
Чăваш ун чух тухать тет улпута!

* * *

Юрларĕ вăл. Сассийĕ кайрĕ
Çак çĕр çинчен тӳпе таран.
Юрланăçем, юман пуç тайрĕ,
Çут шыв вылянчĕ çыранра...

Юрларĕ вăл. Сас çухалмарĕ,
Çӳлте çуталчĕ пайăркан.
Çав пайăрка мана хăпартрĕ
Çут тӳпери Турă таран...

Юрларĕ вăл. Эп те юрларăм,
Манма май çук халь çав юрра!
Çав юрăри  чăн сасăсем те
Вĕçеççĕ халь те ман тавра.

* * *

Ăшунта сан те Турă ларать,
Тен, шуйттан Турă сăнлă курнать?
Йăлл! кулать те чуна çавăрать,
Чăрр! пăхать те ăса пăтрататать...
Эпĕ ĕнтĕ тем чул пăхса лартăм,
Турă пулĕ тесе шухăшларăм.
Анчах эсĕ мана пулăшмарăн:
«Юрататăп!» – тесе каламарăн.
Халь вара кулянса та айванăн
Яланах шухăшлатăп пĕр майлăн:
Эп чăнах та сана юрататăп!
Тем шуйттан вылясан та сăнра
Пур пĕрех санра Турă куратăп.

* * *

Чĕре темле хăратнă пĕчĕк кайăк евĕр
Пĕр те пĕр чух тапма та чарăнать пуль терĕм.
Таппи ун илтĕнмест. Тапсан та питĕ сассăр,
Вăл пуррине туйса тăратăп пĕр хавассăр...
Анчах тем пек пĕтсе çитсен те, тем тусан та,
Пуçа çапса ватсан та, суккăрлатсан та
Ман чĕреме нимпе те эс чараймăн, –
Вăл тапнинчен эп хам та халь хăрарăм,
Ăна чарса пĕтереймерĕм...
Кашни таппи пĕр юрату пуль терĕм!

* * *

Çулçă йăтнă хурăн пытарать пек хурлăх.
Хурăнра пурах пек темле урăх пурнăç.

Вилнĕ çыннăн чунĕ, тăвансен кун-çулĕ...
Хам та эп пуласшăн шурă хурăн çумĕ!
Ак çăва çинче те хурăна куратпăр,
Тăван-пĕтене те асăнса хыватпăр.
Ватăсем пире те ырăпа пиллеччĕр,
Вĕсемпе пĕрле-çке пурăнма пĕлетпĕр.
Çулçă йтнă хурăн милĕкне хуçатпăр,
Мунчара чăваш пек хытă çапăнатпăр.
Асанне тасалăхĕ, асатте вăй-халĕ
Шурă хурăнра çеç упранать пуль халĕ?
Пур-ха теççĕ савнă сарă хĕр ачашĕ, –
Ху та эсĕ халĕ айван ача ашшĕ!
Куллен ĕçсе ӳсрĕн шурă хурăн шывĕ,
Унăн хуппинчен те савăк юрă хыврăн...
Çулçă йатнă хурăн тăван пекех пулчĕ,
Çавăнпа пуль чунăм ун çутипе тулчĕ!

* * *

Шурă хурăн тăрать дирижер пек.
Малтан шухăшлавлăн кăшт алă сулать те
Пуçлать çакă çут тĕнчене хускатмашкăн...
Ак çил вăйлăрах килсе çапрĕ.
Шур хурăн юпа пек, пĕрех авăнать,
Халь хăй те оркестр пек сас кăларать!
Çапла çав вăл пурнăç, пĕр тикĕс тă-
масть.
Малтан шайлашуллă, кайран пăтранать...
Шур хурăн епле халь хăлаçланать!
Кампа-ши, кампа чарăнми çапăçать?
Е хăй дирижер çавăн пек кăтартать?
Турачĕ кĕсмен евĕрех авăсать...
Халь хурăн тӳсет пуль темле хĕн-асап?
Эй, çил, чăрсăр çил асать те асать.
Шур хурăн халь тин шыва путакан пек.

Халь эпӗ кӑна ӑна ҫӑлакан пек.
Унпа пӗрле эпӗ тӑрап ҫил ҫинче,
Ман алӑ-ура та турат ҫумӗнче!
Ак алӑ сулатӑп, ак эпӗ юрлатӑп,
Вӑй пурччӗ пулсан та кӑштах тайӑлатӑп,
Ҫиле хирӗҫ эпӗ темскер кӑшкӑратӑп,
Тӗнче умӗнче дирижер-ши пулатӑп?
Ҫил-тӑвӑл та иртрӗ, ҫанталӑк шӑпланчӗ.
Тепре алӑ султӑм, халь ӗнтӗ лӑпланчӗ...
Каллех ҫепӗҫ кӗвӗ, каллех ҫутӑ шанчӑк
Шур хурӑн тавра хуҫаланчӗ...

* * *

Ҫулҫӑ тӑкнӑ шурӑ хурӑнӑн
Тайӑлтӑм та – пӑхрӑм.
Ҫӗр ҫине сарса хунӑ ҫулҫӑ
Тем тӗрлӗ тӗслӗн те питӗ канлӗн
Ҫӗр ҫумнех ҫыпҫӑнса выртнӑ.
Пӗрисем пылчӑкпа хуралнӑ,
Теприсем ҫил ҫинче ҫухалнӑ...
Тайӑлса-тайлса эпӗ пӑхрӑм,
Ҫулҫӑ сарнӑ ҫав сарӑм ҫинче
Тӗкӗрти пек хама та куртӑм...
Пурччӗ вӗт-ха ман ҫутӑ сӑнарӑм,
Пурччӗ вӑрӑм ҫилхеллӗ туратӑм!
Ешӗл тум ҫӑвӗпех ҫийӗмреччӗ...
Халь вара ҫӗтӗлсе пӗтрӗ!..
Тайӑлса-тайӑлса эпӗ пӑхрӑм,
Ҫав сӑнра хама хам шырарӑм...

* * *

Пӗр пӗчӗк кӑна хӳшӗ тума тивет пулӗ.
Ҫумӑр килсе ҫапать хумлӑ-хумлӑ.
Хамӑр та эпир халӗ пулӑ!..
Ҫакатпӑр тӗмӗ ҫине атма,

Вара пуллисене те тытма пулать...
Атма тени, чăн та, шăтăк.
Тумлам тумлать кăна...
Эх, апăршасем, пулă тытма каятпăр терĕмĕр.
Хамăрах пулăсем пек лекрĕмĕр.
Çумăр чарăнать пулĕ-ха тесе,
Ахалех хĕпĕртеткелерĕмĕр...
Çумăр чарăнмарĕ.
Чунăм та лăпланмарĕ.
Пĕрре çак серепене сирсе ярса
Хӳшĕрен чупса тухасчĕ,
Çумăр айĕнче пĕчĕк ача пек
Çара пакка ташласчĕ!
Тумлам ман ӳте параппан патакки пек çаптăр!
Унтан кайса ӳкесчĕ кăптăр-каптăр...
Вара хăрăк турат пулса
Шарла шывпа юхса касчĕ те
Уру çумне пырса çапăнасчĕ...
Эсĕ калăн: «Мĕнле параппан патакки ку,
Кун пек те килсе тухать-и ку, якку?
Ку патакпа эпĕ хӳшше те тĕреклеме пултаратăп.
Кирлĕ пулсан, юпа çапса кĕвĕ калатăп.
Ку япалапа тем те тума пулать,
Пĕрех мĕн те пулин юлать»...
Параппан пек танкăртатать пирĕн шăналăк.
Тухса тарма çуккă-ши вара алăк?
Тăрри те шăтăк.
Эпир йĕпентĕмĕр.
Çумăр витĕр киле кайрăмăр.
Вăхăт чылай иртрĕ.

Анчах çав параппан сассиллĕ хӳшше пĕрех манаймарăм.
Вăл пире халĕ те кĕтет.
Хăй хӳтлĕхне чĕнет.

* * *

Икĕ çырма пусĕ сăртлă та йывăçлă.
Таçта çакăнтах выртмалла çăва пуçĕ...
Ял енчен пырса кĕме хапха уçă,
Умне çырма урлă кĕпер хывнă.
Пирĕн те çакăнта килсе выртма тивет вĕт-ха.
Тăвансемпе пĕрле пурăнас кăмăл пĕтмест вĕт-ха.
Çимĕк кунĕ çăва калама çук илемлĕ.
Кунта килме пире атте-анне пилленĕ.
Анне, сан вил тăпруна пĕр ывăç тăпраран турăм,
Тăпру тӳпери шурă пĕлĕт пек çăмăл пултăр!
Атте, эсĕ те çакă таса çĕр ăшнех кĕрсе выртрăн...
Санпа юнашар ларма халĕ питĕ ырă.
Мĕн тăвăн ĕнтĕ. Çын шăпи вăл çапла.
Пурăннă чух пулать апла та капла...
Пухатпăр та акă темĕн чул тупра,
Пăсатпăр тап-таса юна...
Хура тăпра вара ялан хура.
Çак çĕр çинче эпир кĕтмен хăна кăна!
Пĕрре килсен кайма çитет пуль вăхăт?
Çак алăкăн уçса кĕме пур икĕ хăлăп.
Халĕ, ак, тытса тăратăп пĕр енчен...
Пурăнасчĕ-ха мĕн виличчен!

* * *

Шурă-шурă пĕлĕт çӳлте.
Шурă-шурă сирень – вил тăпри çинче.
Ан хурлан, анне, ачусем килсе çитрĕç,
Пĕлĕт евĕр шурă пуçĕсене усрĕç...
Епле пĕчĕк вĕсем, çав вăхăтрах... ватă.
Эсĕ ĕлĕкхи пекех çап-çамрăк.
Çип-çинçе те хыткан...
Эсĕ пире нихăçан та вăрçман!
Çĕр улми, ас тăватăп, пĕр чугун пĕçерсе лартаттăн,
Икерчĕ вут уççинче пĕçереттĕн...
Эпир пиллĕкĕн те, ĕлкĕрейместĕн!
Çуркуннепе тата урама çарран кăларма-стăн.
Эпĕ вара, тухсанах, пушмака карта урлă
Каялла ывăтаттăм,
Урам тăрăх тиха пек ĕрĕхтерсе чупса каяттăм.
Чирлеттĕм.
Эсĕ вара мана вĕри сĕт ĕçтереттĕн...
Ах, епле йывăрччĕ ăна ĕçме!
Эсĕ хистеттĕн!
Çавăнпа халĕ сывă тăратăп та.
Сан çинчен шухăшлатпăр.
Шурă пĕлĕт пек çăп-çăмăл пултăр эсĕ йăтнă çĕр, анне!
Тутлăхра пурăн!
Шурă-шурă сирень çеçкисене хуратпăр
Сан вил тăпру çине.
Шурă шухăшлă пул,
Пире ан асăн...
Эпир вара сана асăнсах тăрăпăр...

* * *

Урам енчи чӳречерен пĕр ача пăхса ларать.
Пуç çинчи тӳпе вĕçĕ-хĕррисĕр тата кăвак.
Уçлăха вăл темле пысăклатса кăтартать.
Ура айĕнчех, ас ту, кĕрсе ан ӳк, ланкашка!
Унта пăхатăн та, çав тӳпе йалт вырнаçать...
Килти стена çинчи ӳкерчĕк те чӳрече!
Чул стена çинчех, çав тĕлтех, тепĕр тĕнче.
Чупсах кĕрсе кай, çӳре, çав тĕнче ăшĕнче –
Вăрманĕ те, шывĕ те пĕтĕмпех ал айĕнче!
Пăхатăн та куратăн: кĕтесре пур пĕр турăш.
Унпа юнашар эсĕ ху та чура, е турă.
Эсĕ те асапланатăн çылăхлă чунупа,
Кăкăр тулли сывлатăн таса сывлăшпа...
Тепĕр чӳрече те пур7 Вăл çын куçĕ.
Вăл, тен, çăлтăр çутине пухакан çулçă?
Куçран пăхма та, çăлтăра тытма та йывăр...
Эх, пуласчĕ пин çулçăллă йывăç!
Çĕр пин юрăллă чăваш юрри те пур...
Çĕр пин сăмахпа тĕнче тасалнă!
Хăпарать тӳпене уйăх... виле пек шапшур.
Халăх та ахальтен мар пуль хаваслă?
Эпĕ те çавна ача пек куратăп,
Урам енне чӳрече касса кăларатăп,
Шухăша кайса пăхса ларатăп...
Тен, турамăш курки ман пата та çаврăнса çитĕ?

* * *

Такам, таçтан, шалтан-шалтан
Пăшăлтатса калать:
«Пĕтетĕн!» – тет.
Ман ĕнтĕ хăраса ӳксе,
Пĕр сивĕнсе те, пĕр вĕриленсе:
«Пĕтетĕп!» – темеллеччĕ пуç пĕксе.
Анчах та эпĕ пит чее чăваш.
Пĕр ват юман çине çырса хуратăп ят.
Тата ун çулçине шăлпа çыртса тĕрлетĕп
Тем тĕрлĕ тĕрĕсем...
«Пĕтетĕнех!» – тесе хыт кăшкăрсан,
Шуйттанпала кăшт хутăшсан, –
Эп пит чее чăваш, –
Пĕр юрă çех ăшран кăларăп,
Çак тĕнчене çав юрăпа йăлтах чăрка-
тăп...
Е пĕр сăмах!
Ăна пĕлетĕр эсĕр.
Ăна çырса сухаçă уй варне,
Вăл илтĕнет вăрман кашлавĕнче...
Тăван та юрă, тĕрĕ те сăмах,
Чăваш! тесе ят панă çутă уй та
Мана пĕтме парассăм çук.
Кам вăйлăрах-ха тет вара,
Çут уй, е урмăш сас?

* * *

Тĕнче пĕтет пуль тенĕ чух,
Эп ĕненеп, килет пĕр çын
Çак çĕр çине пире çăлма,
Чăваш пулса та пурăнма...
Чăваш килет, чăваш килет, –
Вăл килмесен, тĕнче пĕтет!

Тĕнче пĕтсен вара мĕн пур?
Пĕр вĕçĕмсĕр пĕр хурлăх пур.
Ун чух вара, çăкăр тесе,
Ют çĕршывран пырса кĕрсе,
Çын вĕлерен тур ячĕпе
Пире пĕтерĕ пĕтĕмпе...
Тĕнчен те пĕтнĕ паллисем
Куçа тăрнаççĕ: ху пĕлен!
Чунĕсемпе те пĕтнисем,
Çынланĕçĕ, чăваш килсен.
Чăваш пек кăмăллăн кулса,
Чун-чĕререн сывлăх сунса,
Иртен-çӳрен кашни çынна
Ал парĕç, тен?.. Унтан вара
Пуçлайĕçĕ пĕр ĕç тума.
Çынсем вĕренĕç майĕпен
Чăваш пек çыншăн пурăнма...
Чăваш килет, чăваш килет!
Чăваш килсен пулать-ха та!
Анчах та хальлĕхе пăхсан та
Вăл курăнмасть – куçа хупсан та.
Тĕнче пĕтет пулĕ, чăнах та!
Анчах та темĕнле пулсан та
Эп ĕненеп: килет пĕр çын –
Çав çыншăн çунтăр кӳтнĕ чун...
Эпир те уншăн тăрăшсан,
Ун пек пулма шухăшласан,
Вăл пурпĕрех çак çĕр çинех
Пире çăлма çул тупатех...
Эпир пулсассăн – вăл пулать.
Эпир килсессĕн – вăл килет.
Чăваш килет, чăваш килет,
Вăл килмесен, тĕнче пĕтет!

* * *

Вăрмантан тухрăм, уй тăрăх утрăм...
Хăлхаллă та, куçлă та пултăм.
Çӳле пăхрăм, пĕр çăлтăр куртăм –
Çавăнтах-ши манăн çĕнĕ çуртăм?

Çавăнтах пуль тăван-пĕтенĕм, –
Вĕсенĕн юррисене итлерĕм:
«Ан авăн та, шĕшкĕ,, ан авăн», – теççĕ,
Уйăх çинче урпа акса илеççĕ.

Урпинех те вырса илес çук,
Сăрине те ĕçсе курас çук.
Çăлтăр çиçет куçа çиес пек,
Çил çĕкленет çула хуплас пек.

Çил шавкăнне илтес марччĕ,
Çырма юррисене манас марччĕ.
Чăваш уйĕ тăрăх утрăм та утрăм...
Çăлтăрсемĕм, ăçта ман çуртăм?

* * *

Уйăхран иртетĕп-ха тесеттĕм.
Хăвăртран та хăвăрт илтереттĕм...
Уйăх та чупатчĕ питĕ хăвăрт,
Каçхи ял выртатчĕ питĕ шăпăрт.

Вăл манран пĕр шит юлмарĕ!
Эп çавна курса йăлтах аптрарăм...
Тӳпере тăрать-ха питĕ янкăр,
Темĕн чул çут çăлтăрсем те çакнă...

Темĕн чул çул тăршшĕпех эп чупрăм,
Уйăхран иртесшĕн пултăм.
Ĕнтĕ эпĕ ватăлăтăм ку темĕн...

Çутă уйăх халь те пуç çинчех-мĕн!

Эпĕ халь те уйăхран иртесшĕн!
Халĕ те чупатăп – мĕншĕнне пĕлместĕп.
Тӳпере çут çăлтăрсем тăраççĕ,
Эпĕ иртесрен кăштах хăраççĕ...

Çулĕ вăл пĕрех çав уйăх витĕр.
Çакă çул çинчех кун-çулăм ирттĕр!
Пĕчĕк ача евĕр, акă, илтеретĕп,
Уйăхран эп майĕпен иртетĕп.

* * *

Çутă кĕтме тытăнатăп
Эпĕ Çĕн çул çитеспе...
Пĕчĕк пĕр елка лартатăп –
Чăрăш çути килтĕрех!

Килтĕр-ха, тетĕп, çав чăрăш,
Кĕтĕр-ха, тетĕп, шăрши.
Эпĕ пулса пуль, тен, чăркăш?
Халь, ак, пулам Хĕл Мучи!

Пулăп та – чăрăш та ларĕ
Хăй куççульне кăларса.
Кам-ха мана халь каларĕ –
«Чăрăш пек эсĕ таса!»

Чăрăш пек, чăн та, ларатăп.
Чăрăш пек, чăн та, пĕтеп...
Пĕчĕк хунар çутса ярăп –
Эпĕ сана вĕт кĕтеп!

Эпĕ сана вĕт кĕтетĕп.
Пулăн-ха, тен, кун çути?

Тен, çавăнпа та пĕлетĕп
Чăрăш лартма каç пултти.

* * *

Чĕкеç пекех пулас тесе,
Чупма пуçларăм ир çинче.
Чĕкеç çӳлте, çӳлте вĕçет...
Мана, паллах, вăл халь пĕлет!

Мĕнле пĕлмесĕр тăтăр-ха?
Чĕкеç пекех эп ир çинче,
Унпа пĕрлех ура çинче –
Чĕкеç пекех вĕçетĕп-çке!

Ура йĕрри тусан çинче,
Пичет пекех çĕр питĕнче...
Çĕр çийĕпе вĕçсен-вĕçсен...
Эп вĕçсе кайăп пит инçе.

Пĕрле, тен, вĕçĕпĕр инçе?
Чĕкеç чĕппи пек ир çинче
Пĕрле пĕр çул тăватпăр та,
Пĕр пĕчĕк сас паратпăр та...

* * *

Хĕрарăмсăр пĕр кун та çуккă,
Хĕрарăмсăр пĕр каç та çук.
Тĕнче пĕтсен те питĕ çутă
Ун аллине чуп тунă чух...

Çак пурнăçра хăш вăхăтра та
Çумра хĕрарăм пултăрччĕ.
Мĕн кирлине йăлтах тăвар та –
Вара вилсен те юрĕччĕ.

Çавна кура та пит ачашшăн
Эп тав тăватăп арăма.
Савса çуратнă пĕр ачашăн
Ĕмĕрĕпех эп парăмра!

Ĕçе килсен те эс, ас ту-ха,
Е урамра, е хăнара...
Хĕрарăма кăшт çеç чуп ту та –
Каллех пулать пек пурăнма!

* * *

Тĕл пулса санпала хĕллехи тĕттĕм каç.
Урамра юрпала вылясаччĕ пĕр кас.
Кăлтăр-кăлтăр куллу халĕ те янăрать,
Ман ура çав сас хыççăн кайса йĕр тăвать.

Юр çинче, тур курать, пур тем пысăкăш ят –
Ахаль çын халь ăна вулаймасть.
Çĕр каçа çырнă пулнă çавна ик ура –
Çав кăна çав ята ас тăвать.

Ачалла выляни, мĕн тăван, асăмра.
Вылясан вĕт тухать вăкăр та!
Ыраттарчĕ пуль çав шурă юр чăмакки –
Тута тăсрĕ савни, тек тухмасть урама...

Аса ил-ха, савни, хĕллехи çав каçа.
Аса ил те кала пĕр сăмах.
Манса кайнă пулсан, кулса яр савăнса –
Шурă юр та тута ас тăваççĕ ăна!

* * *

Хĕвел ларать пакша пек

Юман йывăç тăрринче.
Сар хĕр вылять ача пек –
Сарă мăйăр аллинче.

Ан-ха, хĕвел, ан-ха тет.
Сана мăйăр парап тет.
Хĕвел, чăн та, пакша пек
Анать йывăç тăрринчен...

Акă, мăйăр, çи-ха тет –
Сар хĕр чĕри хĕпĕртет.
Акă ĕнтĕ, мĕн ĕнтĕ –
Хĕвел çумра çеç çӳрет.

Чун юратсан çапла çав,
Сар хĕвел те пакша çав...
Мĕн кирлине хĕр пĕлет,
Мăйăр катса çитерет.

* * *

Эпир пĕчĕк чухне, ас тăватни, савни,
Пӳрт умне шурă хурăн лартсаччĕ.
Чун канмалăх шывне савăнса та ĕçни
Нихăçан та асран каймастчĕ.

Хурăн хăй пуль каларĕ пире чăн сăмах
Куç хупсан та курми çурхи шăп каçсенче.
Куркари пĕр тута туса ĕçнĕ шывах
Халь те пулĕ турат вĕçĕнче...

Халĕ ĕнтĕ çав хурăн пӳртрен çӳлерех –
Ун вулли перĕнет тӳпене...
Ал çитми çакса янă сап-сар вĕллерен
Шăнкăрч халь вĕçтерет чĕппине.

Йĕр хăварчĕ пулас хытă пурнăç тени.
Уйрăлма вăхăт çитнĕ чухне
Çырса хутăм унта нихăçан та кайми
Хурăн пек ӳсекен хĕр ятне.

* * *

Хĕрлĕ-хĕрлĕ, питĕ хĕрлĕ çулçă
Çул çинче выртать хăрах çунатăн...
Укçа пек выртать – тухатнăн,
Чĕрине такам çухатнăн...
Акă вăл кăшт çĕкленсе те илчĕ,
Ун мана юлташ пулассăн килчĕ.
Эп ăна чĕре çумне тытсассăн,
Хам та урăхла туяп пулассăн...
Ах, анчах, ун пек тума пĕлмерĕм,
Çулçăна та хам çума илмерĕм.
Çулçă выртса юлчĕ... Питĕ тăлăх
Эп те утрăм ирхи урам тăрăх...
Ĕнтĕ эп ăна текех кураймăп,
Ун пекки тепре тупаймăп...
Питĕ хĕрлĕччĕ, хитреччĕ хăй.
Витĕрех пăхсан та курăнатчĕ хĕр...

* * *

Килет пек вилĕм... Куçа вăл курăнмасть.
Çак çуркунне аван та, пурпĕр пулăш-
масть.
Анчах пĕтес килмест-ха ман!
Эп çакăнта çитсе те каçăхса кулман...
Çĕрпе çак пĕлĕт хушшинче çӳретĕп,
Телейĕм çăвасса кĕтетĕп.

* * *

Ирпе эп пăхса пыратăп,
Шыратăп малашлăх палли.
Вĕçет, акă, кайăк, куратăп, –
Вăл, паллă, тӳпе валли!
Ман паллă пулинччĕ ку, тетĕп,
Тӳпе çӳллĕшне хăпартни...
Кашни вĕçеврех эп кĕтетĕп, –
Пулать пуль-ха кун кăтартни!
Шăпа, тен, куçа курăнсассăн,
Пĕтерĕ чуна хăратса...
Тĕнче кунсерен тем каласшăн
Тăрать пурпĕрех çаврăнса...
Калать пуль те кайăк, илтместпĕр,
Курма та пĕлместпĕр пулас.
Пĕрех, пĕлмесен те вĕçлетпĕр
Куна кайăк пек курăнса!

* * *

Çап-сутă уйăх тӳпереччĕ,
Шап-шур çеçке çерем çинче.
Çыр тĕпĕнчи шыв илтĕнетчĕ
Купăс сасси пек пит инçе...
Кĕтмен çĕртен ак çумăр иртрĕ
Хуралтăсенĕн çийĕпе.
Пĕрле тăмалăх вăхăт çитрĕ
Шыв юхнăçем хăй çулĕпе...
Унтан каллех ак уйăх тухрĕ,
Унпа пĕрле çут çăлтăрсем...
Çырма каллех пĕр майăн юхрĕ
Кайма та вăхăт çитнĕçем...
Сыв пул, апла, тулли çырмаçăм!
Сыв пул, шап-шурă улмуççи!

Çыр хĕррине тухса лармасăр
Çеçке тăкаймăп терĕн-ши?

* * *

Пас тытнă йывăç пит хитре...
Шутлатпăр, темĕнле юмах
Хăй тĕнчине чĕнет пире.
Ирпе тăрсан, çапла, чăнах,
Тухса утатпăр та ĕçе,
Пăхса пыратпăр тĕлĕнсе...
Мĕн-ма вăрман тăрать хитре?
Пас тытнăран, паллах!
Анчах таçта, сисет чĕре,
Сăлтавĕ-мĕнĕ тарăнрах...
Йывăç пас тытнă вăхăтра
Турат ярасшăн пулмалла:
Юртан пулсан та çулçă пек,
Юртан пулсан та çеçкере!

* * *

Сана манса кайма май çук.
Çил-тăвăллă кунсем килсен те тепĕр хут
Эс куç умне тухатăн тап-таса,
Каллех ак пăтрататăн ман ăса.
Епле хитре сан куçусем паян,
Епле хитрен сар çӳçсене майлан...
Шур юр ӳкет çӳлтен, хуплать çула.
Юмах пекрех тăрать шап-шур хула.
Эпир çӳретпĕр иккĕн çавăнта
Ик мĕскĕн чун, алран-ал çавтăнса...
Шур юр ӳкет, пиçет çил каснă пит-куçу.
Çук, ытарма та çук çиçет сан кăмăлу!
Сана манса кайма май çук нихçан,
Хăçан çапла тепре тĕл пулăпăр ыран?
Ӳкет шур юр, ӳкет сан пуç çине –

Çав шуратать пуль пирĕн çулсене?
Эс куç умне тухатăн тап-таса,
Каллех ак пăтраттатăн ман ăса.
Çил-тăвăллă кунсем килсен те тепĕр хут
Сана манса кайма май çук.

* * *

Шурă ĕнтĕ тĕнче, питĕ шурă...
Кунĕ пĕлĕтĕн майĕпен шурĕ.
Юр пĕрчисем çаврăнкаласа килчĕç –
Вĕсем те-ши вара çапла вилчĕç?
Шурă ĕнтĕ, юр пĕрчисем те шурă!
Çӳç пĕрчисем те шуррисем пурччĕ!..
Ватă çын пек калаçаччĕ тĕплĕ,
Чăваш чĕрĕлессе питĕ кĕтрĕ...
Акă çитрĕ те чăваш кун-çулĕ –
Пурнăçĕ те çапла шурĕ пулĕ?
Ача чухне амăш чĕрçине таптарĕ.
Пĕрех такăр çулпа утса ураймарĕ...
Сана аса илсе питĕ ыррăн
Пуçра шухăш çаврăнкалать йывăррăн.
Ĕнтĕ тĕнче шурă, питĕ шурă.
Кунĕ пĕлĕтĕн майĕпен шурĕ...

* * *

Мĕн калăн, тусăм, паянтан
Хĕвел те тухмĕ терĕн-им?
Хĕвел тухать мĕн авалтан, –
Çуралсанах курмарăн-им?
Куратăн, акă, вилнĕ чух та
Куçа хупса та иличчен
Чуна вăл кĕрĕ кирлĕ чухлĕ
Кайăк пулса та кайиччен.
Кайсан та мĕн, леш тĕнчере те
Хăйне пĕр майлă пур хĕвел.

Çавна пуль вилнĕ чĕрере те
Туйса тăратăн мĕн ирччен.
Темле пĕр кĕвĕ, пĕр хăват
Хĕвел тухсан хуçаланать,
Мĕн ачаран чуна кĕрет –
Тен, çавăнпа тĕнче кĕтрет?
Чăнах та тӳпери хĕвел
Шав çуннăçем, вăхăт çитсен,
Тухать пуль чĕререн хĕвел –
Çав çутатать тĕнче пĕтсен!

* * *

Кĕр кунĕ куçне уçса пăхрĕ, –
Сар çулçă пек пĕчĕк куçне...
Кунсен çутине çулçă пухрĕ,
Хĕвел кĕнĕçем кĕтесе...
Унта-мĕн пĕр пĕчĕк ӳкерчĕк...
Унта, куçа хуп, çуркунне!
Кĕр кунĕ ăçтан-ха тупрĕ
Хĕл урлă килес кунне?
Тулта çулçă çуттăн ялтрать-ха
Хĕвел аллине лекнĕ май.
Кунта вара юр çывăрать-ха,
Нимпе вăранасшăн мар!
Хĕвелĕ те пур пек ĕнтĕ,
Куçа шартарса пăхать...
Пĕр йывăçăн хăрăк турачĕ
Çӳлтен ак перет те анать!
Вара, тен, вăранĕ юр кĕрчĕ,
Тен, çитĕ вара çуркунне?
Кĕр кунĕ чăнах та çĕтрĕ
Ӳкерчĕк çуралнă чухне!

* * *

Ешĕл çулçă тĕнче куçлать,

Аслати авăтма пуçлать...
Пăтăр-пăтăр! ӳкет шурă çумăр, –
Тĕм айне эпĕ кайăк пек чăмрăм...
Аслати чуна йăлт пăлхатать,
Чун тачтах пуль кусса каять...
Сиксе кайрăм эп çумăр хыççăн,
Çумăра тытса пăхрăм ывçăн...
Аслати пуль вăл аслă чӳкçĕ,
Сикнĕ чух пĕр сăмах тухса ӳкрĕ:
Кĕмсĕр-кĕмсĕр те кĕмсĕрт! терĕ,
Сăмахне те никам та илмерĕ...

* * *

Çĕр çинче музăсем нумай.
Маншăн эсĕр чăн муза пултăр.
Атăлта пăр тапраннă май
Ман чĕре те хускалчĕ пулĕ?
Турă пек эсĕр тăтăр умра –
Алăрта сирĕн халăхăн мулĕ.
Кĕнекеллĕ пулсассăн вара,
Çак тĕнче те хăватлă пулĕ?
Кĕнекеллĕ пулсан çутăрах,
Кĕнеке вăл ача пек çутă!
Апла, чĕрĕр ачан култăрах!
Кĕнеке «улпут» пек килнĕ чух
Пурăнма та халь пултăр тутлă!

* * *

Симĕс курăк сырса илнĕ
Тĕмĕ çумне пытăм та
Уçса пăхрăм çулçине –
Çырла пур пек туйăнать!
Тĕмĕ çинче ним те çуккă,
Кăткă çеç кăшт чупкалать.
Шыракалать йăвине –

Çырла çук мар, туйăнать!
Çырли пур-и, çук-и те
Симĕс курăк ăшĕнче
Пурнăç пурри курăнать –
Куçа çав савăнтарать!

* * *

Элли Юрьева асăнса

Элли итлерĕ Вольфганг кĕввине.
Вăл кайнă шăплăхра пĕр кĕвĕ çех!
Çак кĕвĕ пурнăça кăшт ас илтерчĕ,
Çавна илтсе ӳнерçĕ кăшт киленчĕ.
Чăвашăн умĕнче çак кĕвĕ çукчĕ,
Халь мĕн тума килет хăлха çине?
Ăна илтсен чăваш та алă çупрĕ,
Вăл хăй те халь çупатчĕ, тен?
Анчах ӳнерçĕ пит-куçне хĕстерчĕ,
Ун мрамор тутисем кăшт кулчĕç, тен?
Вăл пĕчĕк Моцарт пек сиксе те илчĕ,
Мĕн илтнĕ кĕвĕ пек кăлтăртатса кулса...
Епле хаваслă пулнă пуль вăл çырнă чух та
Епле киленнĕ пулĕ хăйĕн кĕввипе?..
Халь тин, Элли, эс итлесе тăрантăн,
Итлерĕç пулĕ сан ӳкерчĕксем – пĕрле?
Санпа пĕрле хĕн курнисем лараççĕ,
Чĕрисене чарса сана çеç пуç таяççĕ...
А, Моцартăн кĕвви юхать çырма пекех,
Ăна чарма никам та хал тупаймĕ...
Эс Моцарт пек, Элли, çуралтăн çĕр çине,
Хăвна валли тупса эс чĕрĕ кĕвĕ –
Чăваш кĕвви янрарĕ пирĕнте!..
Европа кĕввине итленĕçем вăйланчĕ,

Чăваш чунне каллех чĕртсе вăратрĕ...
Тавах сана, тавах, Элли, пĕрле пулнишĕн,
Ман чĕрене савма тепре килнишĕн.

* * *

Вăрманти пĕр каска çинче
Ларса кантăм эп пĕринче.
Пĕр тĕнче çав каска тавра
Пурăнатчĕ пек хăй пĕр çавра.
Такам ватнă çап-çут кĕленче
Ванчăкне çут хĕвел çутататчĕ.
Такам ĕçнĕ пулас хăй чунне,
Ĕçсе янă та – çапнă та ватнă...
Темĕн тĕслĕ çап-çут çиййĕпе
Кăткăсем чупкалаççĕ тем тĕрлĕн.
Юлнă пуль çав унта сарă хĕрĕн
Чуп туса пылаклатнă – тута хĕрĕ...
Мĕн чул тупнă пуль савăк кунта
Юратса та сăра ĕçсе...
Халь тин эпĕ ларатăп пăхса...
Çын пек мар эс кунта. Эс ĕçмен!

* * *

Кияк! тăвать текерлĕк,
Çӳлте тăри юрлать.
Куç умĕнчи тĕрленчĕк
Ĕмĕрлĕхе юлать.

Чунпа эп хам та кайăк,
Савни ман пĕр тăри.
Унпа вĕçсе эп кайăп –
Ăçта тĕнче хĕрри?

Тĕнче хĕрри те çуккă,

Çук пирĕншĕн чару.
Хĕвел пăхать те çуттăн
Пуçлать пуç çавăру.

Пуç çаврни пĕрре вăл,
Çул таврăнни тепре.
Кияк! тăвать текерлĕк.
Тăри те тӳпере.

* * *

Утă вăхчи... Хĕвел çинче
Çиçсе ларать мăн Хусанкай.
Яланхи пек çын умĕнче
Хăй сăввине вулать пĕрмай.

Çак пурнăçра, тет, пĕр чĕре.
Тĕнче те пĕр чĕре кăна.
Пулсассăн Хусанкай пекрех
Кĕрсе юлать сăвви юна!

Пăхса ларать... Утă вăхчи.
Çава тытса çуласчĕ хăть!
Анчах та сăвăçăн пахчи
Пĕр вĕçĕмсĕр сămах тĕнчи...

Ак çу иртет... Чĕкеç те кайрĕ.
Хĕвел те майĕпен хухать.
Сăвви пĕтмерĕ Хусанкайăн.
Мĕн-ма тесен вăл ут çулать!

* * *

Тахçантанпах çырманччĕ эпĕ
Чунри телейĕмсем çинчен.
Паян вара пурнăç тивлечĕ
Çума пуçларĕ майĕпен.

Таса çурхи шыв евӗр юхрӗ
Чунран тапса тухан телей?
Çав вӑхӑтра вӗт кун та хухрӗ –
Вӑл пӗтрӗ урӑх килмесле...

Çӳлтен кӗтсе эп пӑхкаларӑм,
Ӳкмест-и терӗм пӗр тумлам?
Пӗлӗт тени те тухкаларӗ –
Телей тени çумарӗ çав!

Пӗрех кӗтме эп пӑрахмарӑм –
Чунри çитменлӗхсем çук мар!
Çӳлтен тивлет çума пуçлас-тӑк,
Мана никам та кирлӗ мар!

* * *

Темле пӗр хӳхӗмлӗх, тасалӑх...
Мӗн ӗлӗкрен килен пӗр сас
Ман чӗрене хыт кӑтӑкларӗ:
Çурхи куккук пек мӗн калас?

Тепре чухне çурхи кун майлӑ
Чунра хӗвел хуçаланать.
Тахçан-тахçан манса хӑварнӑ
Телей тени те тупӑнать!

Ем-ешӗл тумлӑ çут çанталӑк.
Туррӑн пекех... куккук сасси.
Каллех тепре те таврӑнас-тӑк,
Пулатӑп хам та хур аçи!

* * *

Мӗн хурлӑхлӑн пӑхса ларатӑн?
Пуçна ухатӑн тапхӑртан.

Е çумăр çăвасран хăратăн?
Çусан вăл çутăр хытăрах!
Пĕрех ятна çуса яраймĕ.
Мĕн çырнă – юлĕ ĕмĕре!
Усал тени те тек тытаймĕ –
Яту çӳрет халь пĕлĕтре.
Пĕрех такам пырса калас пек,
Санăн ума йĕкĕлтесе...
Мĕн-ма вара кунта çак палăк
Тухса та ларнă пĕшкĕнсе?
Пире вăл кансĕрлет кăна-иç,
Ыйтсан та ним те парас çук.
Ун пеккисем, чăнах, сахал-им?
Çавăн йышши ку, ăçтиçук!
Пырса пăхап та чун таçта пек
Çӳрет санпа пĕр пĕлĕтре.
Поэт пекрех пуçа ухап та
Хама курап ĕмĕрлĕхре!

* * *

Мĕн кирлĕ пултăр çĕр çинче?
Мĕн кирлĕ пултăр пĕлĕтре?
Пурнăç пулсан çын умĕнче
Кĕтни килет пĕр ĕмĕтре.
Ĕмĕтленме пĕлсессĕн çеç
Хăвна туятăн Турă пек.
Анчах тĕнче çавна пĕлмест –
Иртет çеç хăйĕн çулĕпе.
Ĕмĕтленесчĕ те – пулмасть.
Ĕмĕтленме чĕрем çитмест.
Тен, çавăнпа та ăс-пуçа
Мала хуратпăр... Тем пĕлсе
Ĕмĕтленме те вĕт хăратпăр!
Çын куласран, тен, усалран...
Халь-халь тытать тесе тăратпăр...

Ăçта ĕмĕтленме вара?
Ал-урараи хытса утатпăр,
Çынран тек юлас мар тесе...
Телей пекки темли тупатпăр.
Тĕнчи парать – йĕкĕлтесе...

* * *

Арăм ман çывăрать уйăх пек...
Уйăх витĕр выртать ман çул...
Эх, утасчĕ унпа шурă пит çутипе,
Урăх çул тĕнчере пулас çук!
Тӳпене вĕçсе кайрĕ пĕр кайăк хуран,
Ун сасси хăлхарах янăрать.
Эпĕ хам та пулас кайăк пек курăнап,
Вĕçсе кайрăм та, сассăр юлап...
Çутă уйăх та сассăр... Мĕн тума ăна сас?
Пичĕ ун арăм пек çутатать.
Халĕ те çавă çутă мана çутатать,
Çавăнпа çĕнĕ кун пуçланать.

* * *

Вĕтĕ-вĕтĕ хумлă çут çанталăк
Çил пекрех кĕресшĕн чăтлăха.
Пысăк йывăç пек ӳссе лармалăх
Çуккă-ха манра хăват...
Çавăнпа пуль чĕтренетĕп вĕттĕн,
Вĕтлĕхрен эп халĕ те тухман...
Эп унта кĕрсе кайса йăлт çĕтрĕм.
Тен, унтах хăвна халь эс тупан?
Лăпкă, чăн та, çут çанталăк лăпкăн
Мана çеç пуль вĕттĕн чуп тăвать.
Е хĕр евĕр вутлă чунлă вупкăн
Çырмана илсе кайса çапать?
Лăпкăлăх тени халь пур-ха чунăн,

Лăпкаса тăрсассăн, вăй килет.
Акă, кур-ха, çил çĕкленчĕ хумлăн,
Çил чуна çав хум пекех çĕклет.
Эсĕ кил-ха, кил, хăватлă туйăм,
Картса хур çак тĕнчене çĕр хут!
Çулçă хатĕрлет çӳлте вут-çулăм...
Вăл талса ӳксен тепре çунать!

* * *

Вăрман витĕр тухрĕ
Манăн пĕтнĕ чунăм.
Ак, пăхса тăратăп.
Çулăм ялкăшать.
Çулçă йăлт сaралнă.
Çуттăн курăнать.
Çитрĕ манăн кунăм.
Çулăм йăлт хыпать.
Вăрманти ман вырăн
Ĕнтĕ те юлать?

* * *

Мĕн кĕтетĕп эпĕ чечекрен?
Ӳстĕрех вăл майĕпен пĕччен...
Çутине кăлартăр вăрттăн
Чăваш евĕр майĕпен, хитрен...
Çав çутта эсĕ ăша илсен,
Ху та чечек евĕр уçăлан.
Чечек пек пулма тет-ха, айван!
Çутатасшăн тейĕн уçлăха?
Ай-ай-ай! вăю çитейĕ-ши,
Чечек пек пулма пултарăн-ши?
Эх, çапах та тĕл пулсан санпа
Эс, чечек, пуçна кăшт тай вара.
Майĕпен çеç, вăрттăн эс çутат.
Кам пырса пăхать – курать!

* * *

Пил парать пилешĕм.
Пур çĕлен ăшши.
Çил çинче çĕкленчĕ
Çулçăсен ташши.
Пур пилеш çупкамĕ.
Пур пилеш йӳççи.
Çакă савăнтарчĕ,
Çакă – чун уççи!
Тытса пăхрăм вăрттăн
Пĕр çупкам пилеш.
Кайăк пек çеç хăвăрт
Пĕрне кăшт çиен...
Ах, турах, кĕр кунĕ
Тулса çитнĕ-мĕн!
Çавăнпа ун тумĕ
Пилеш евĕр, тен?

* * *

Хресчен хĕрарĕмĕ тесе,
Çапса кăларнăççĕ сире
Журналăн хуплашки çине.
Лараттăр эсĕр сарăлса,
Кăкăрсене уçса хурса...
Нимех те çукчĕ ӳт çинче,
Кĕскетнĕ пĕр кĕпе пекки
Хуплатчĕ вăрттăн вырăна...
Епле-ха эс, хресчен ачи,
Çапла пулма пултартăн-ха?
Çĕр ĕçĕнче, пĕлетĕр вĕт,
Турă пекрех курăнмалла!
Çĕрпе пĕр пек пулса кайса,
Амăш пекрех пурăнмалла...
Эсир вара пит чаплă хĕр,

Çум çумласа курман та-тĕр?
Тырă епле те ӳснине
Ыйтсан та каласа параймăр...
Анчах нимех те мар иккен.
Хресчен хĕрарăмĕ тесех
Тухса курнатăр çын умне.
Тен, илĕртесшĕн çынсене
Пачах та çав, урăххипе?
Хресченĕн хĕрĕ... Вăл таса.
Вăл çут çанталăк пек хитре
Тăпра пек пулăх. Шыв пекрех...
Ун кăмăлĕ çемçе-çемçе...
Е çил пекрех вăл авăклă
Авкаланать те тепĕр чух...
Йĕр хăварать çак çĕр çинче
Упăшкипе ачисене.
Мĕн-ма, тет, кирлĕ çын çине
Çапла çарапаккан тухма?
Çĕртен-и пистересшĕн вăл?
Е хăй патне туртса илсе,
Йăлтах, тен, пĕтересшĕн пуль?
Кирек мĕнле шухăшласан та
Кăмăл туртмасть ку хĕр патне.
Темле вăл йĕлпĕрсе кулсан та
Пырса тăмастăп ун çумне.
Çапла çуралчĕ шухăшăм
«Крестьянка» журнала курсан.
Ăна тепре илместĕп те –
Тивĕçтермест вăл хресчене!

* * *

Икĕ тĕм юнашар.
Икĕ юлташ...
Пĕри хура,
Тепри хĕп-хĕрлĕ.

Çулçисем вара пĕр пек.
Кăштах сап-сар,
Кăштах сип-симĕс.
Пĕри хура,
Хура пилеш.
Тепри юлташ –
Хĕрлĕ пилеш!
Ларса вĕсем пит юнашар,
Тен, ăнсăртран...
Ăна пĕлместпĕр, тахçантан
Вĕсем юлташ.
Пĕри хура,
Тепри хĕп-хĕрлĕ.
Манăн чуна халь питĕ кирлĕ.

* * *

Аса илсе ĕлĕкхине
Эп çын пулас-ха, терĕм.
Чăнах та, ĕлĕкхи аван.
Вăй пачĕç ватăсем паян.
Анчах та, пĕтĕм пурнăçа
Авалхипе çыхăнтарса
Пĕтсе пыратпăр мар-и?
Чăнах та, авалхи аван...
Малашлăхăм, ăçта эс?
Вăл, тен, тата хăватлăрах,
Ак, хăвалать ман пурнăçа?
Ман пĕр ура аваллăхра,
Тепри каять малашлăха...
Икĕ ура туянăп та,
Кăшт çирĕпрех утатăп та,
Эп çын пулатăп чăнласах!

* * *

Шкул чухнехи хăватлă-çке!
Тăраççĕ ачасем ĕретĕн
Кĕрнеклĕ, ăслă та хăюллăн
Пăхса çак аслă тĕнчене...
Мĕн-ма тесен шкул çыхăнтарнă,
Шкул çутипе ăс-тăн çуталнă.
Тен, чĕресем те чиперех –
Çавна пулах пуль кăшт упраннă?
Епле вĕсем халь маттурланнă.
Пĕр ал çине хурса тăраççĕ
Тин çеç çуралнă паттăрсем.
Шкул тĕнчине каллех вăратрĕç
Пĕрле тăрса тухса кунта,
Аваллăха ас илтерсе...
Ах, хĕрĕсем епле тата
Хитре тумланнă, çăлтăр евĕр
Каллех курнаççĕ тейĕн, тепĕр.
Кăштах, кăшт ватăлнă пулсан та
Куç умĕнчи чечек пекех
Утса пыраççĕ чиперех.
Апла, манман-ха, çав кунсем
Пире каллех ак ыталаççĕ,
Çын пек пулма чунсем хушаççĕ.

* * *

Кĕрхи чечеклĕ Хусанкай
Ларать шухăшласа.
Çула тухаççĕ çиле май
Хуркайăксем – карталанса.
Чечеклĕ эпĕ те паян
Хусанкайпа пĕрле.
Хуркайăксем тӳпе таран,
Эпир вара, çĕрте, пĕрле...
Ларах эс, Хусанкай, кунтах!

Эй, вёçчёр кайăксем!
Хёвел кайсан, хёл кунёнче
Хăраççё чечексем...

* * *

Асамлă ачалăх
Тухать тепёр хут.
Таса çеç хаваслăх
Пулать çакă кун.

Чупса эпё пăхрăм,
Çук, тухаймасть.
Аçта-ши ачалăх,
Мён-ма тупăнмасть?

Эх, çук пуль, пулмарё –
Текех çамрăк мар!

* * *

Мёнпур япала пурăнма тăрăшать.
Пур ун хăйён сăнё те сёмё.
Тапса та тăран ăшёнчи хăвата
Тытса тăраймасть пёр вёçсёр...
Ак, çулçă та, курăр, упранă çутта
Пёрех кăларать вёт кёр кунён.
Çапла çав, çапла, çуллахи çутлăха
Эпир асăрхатпăр çёр тёслён.
Е, калăпăр, çын. Вăл та чунне
Чылай палăртасшăн уççăн.
Тен, çавăнпа та шырать хăй тусне,
Унпа калаçса çуталасшăн...
Кирек мён илсен те, мён пур япала
Хăйне кăтартасшăн пурнать вёт!
Ку тупсăм пит уççăн кёмест те куçа,
Анчах та ку тёрёс, ку чăнлăх...

Апла, ку тӗнчен те чӑн чунӗ пурах,
Ҫав чун пуль хӑйне кӑтартасшӑн!
Ак, халӗ ман урлӑ ҫырать ҫак сӑвва,
Каллех вӑл санпа калаҫасшӑн!

* * *

Хитре ҫанталӑк.
Ҫумӑр ҫурӗ.
Ҫӗкленчӗ ҫил.
Пур-ҫук ҫулҫа килсе тустарчӗ,
Сарса та хучӗ ҫул ҫине.
Халь тин утса пыма та ҫӑмӑл
Тӗнче те тӗртнӗ кавирпе.
Сап-сарӑ, хӗрлӗ, симӗс ҫулҫӑ
Савӑнтарать хӑй тӗсӗпе.
Кӗрхи тӗнче халь хӗрупраҫӑн
Сарса хурать туй парнине.
Эпир санпа пӗрле сив ҫумӑр
Пӑхса тухатпӑр сивлесе.
Епле аван, чӑнах та, ҫумӑр
Йӑлт тухатать ҫак тӗнчене.
Сар ҫулҫӑсем халь ҫумӑр витӗр
Пӑхаҫҫӗ пек куҫҫулленсе.
Тен, ҫавӑнпа ытла хитре халь.
Куҫҫулӗ витӗр пӑхнӑ чух
Тӗнче хӑй парнине курать пек,
Курать те савӑнать тепре.

* * *

Тӑраҫҫӗ хурӑнсем ҫурта пек.
Такам килсе ҫурта лартать.
Сывлать тӗнче вӑраххӑн, тарӑн...
Вӗҫеҫҫӗ кайӑксем хӑраххӑн,
Ӳкет сар ҫулҫӑ... Асӑрхануллӑн

Иртеççĕ çак кунсем таçтан.

* * *

Чив-чив! текен пĕр сасă
Чĕртет çак çĕн куна.
Сар çулçă та пĕр касă
Ӳксе савать чуна.

Иртет-ха хĕр хăюллăн,
Шаккать асфальт çула.
Ун хыççăн пит хăюсăр
Ывтатăп куçăма.

Чиперрĕн, питĕ канлĕн
Сывлать ирхи тĕнче.
Çав тĕнчепе пĕр танлă
Тапать халь ман чĕре.

* * *

Кĕрхи çут çанталăк
Çурхи пек килет.
Вĕсен, тен, пĕр алăк –
Тупма кам пĕлет?
Çĕр тĕрлĕн çунтарчĕ
Кĕрхи çапăçу.
Тек эпĕ илтеймĕп
Кун пек калаçу!

* * *

Пĕр çурт çумĕпе иртнĕ чухне
Ас илтĕм эп. Пулнă ку чăн та.
Ун чух çуркуннеччĕ. Эпĕ ача –
Çумра манăн пурччĕ пĕр хĕрача.
Иккĕн чухне те тĕнче лайăхрах,
Куккукăн янрать çут çанталăк.

Садра пирĕн пурччĕ шăпчăк хорĕ,
Мĕнпур тĕнчене хуплатчĕ йăлт.
Çӳреттĕмĕр эпĕр аташнă пекрех.
Кирек ăçта ут, пĕрмай пĕр çавра.
Пĕрмай пĕр тĕле килсе тухăн...
Çав кил тĕлĕнче эпир халĕ пĕрле,
Пĕрле ыткăнса тăратпăр...
Çав çурт çумĕпе иртнĕ чухне
Паян та юрлатчĕ пĕр кайăк.
Эпир те юрланă тахçан çав юрра –
Халь кам малалла тăсаканĕ?

* * *

Пилеш ман пĕлĕт пек хитре.
Ун çулçисем те çуккă пулĕ?
Килсе çапать сив çил пире...
Пĕлĕт пекех пулатăн сивĕ.
Пилеш çырли кайăк валли,
Нумай-и çакăнса вăл тăрĕ?
Пилешĕм пулчĕ чун палли –
Халь ĕнтĕ пилеш пек эс пурăн!
Ӳксен те ӳк эс çĕр çине.
Иртен-çӳренпеле таптанăн...
Сив пĕлĕте вара – ăмсанăн.

* * *

Кĕрхи тулăх çырла тути
Хĕр тути пек тутлă-тутлă...
Аса килчĕ çав кун çути –
Хĕр тути пек тутлă кунăм.
Тепĕр хут çав кунпа тĕл пулсан,
Татса çиĕп çырла пахчаран...
Ун чухне чăнласах эпĕ пулăп
Кĕрхи тулăх çырла пек тутлă!

* * *

Хусанкая асӑнса.
Каллех тухать пӗр ҫул ума,
Эс такӑрлатнӑ ҫул.
Ҫав ҫулпала утса пыма
Пӗр сӑвӑ ҫыртӑм пуль.
Сан пек, паллах, пултараймас.
Эс илнӗ халӑх сассине.
Ман халӑхӑм халь аякра –
Ӑна пӗтернӗ тахҫанах!
Вӑл пӗтнӗ сан сӑвву ҫукран –
Сан сӑввуна вӑл вуламан!
Тен, ҫавӑнпа та халӑх пек
Хӑйне пӗрре те вӑл туйман.
Эп тухрӑм халь сан ҫул ҫине...
Сӑну ҫине пӑхса тӑрап та
Утатӑп сӑвӑ ҫулӗпе...

* * *

Нихҫан та эпӗ шутламан
Кӗрхи чечек тути ҫинчен.
Ҫуркуннепе шутланӑ-ха
Чечек пылне ӗмсе пӑхма.
Кӗркуннепе вара, мӗнле,
Кӗрхи чечекӗн пур-и-ха?
Хурт вӗҫнине курман пӗрре те.
Тута патне тытса курман.
Тем пулчӗ кӗрхи кун ҫапла.
Пӗр чечеке татса, кӑштах
Пыл хурчӗ евӗр хӑтланса,
Тута патнех тытса пӑхатӑп.
Кӑшт чун туса та пӑхрӑм-и?
Тӗлӗнмелле чечек хитре!
Шӑрши те пур, тути тата!
Тути темрен те ирттерет,

Ёмĕрлĕхе ас илтерет.

* * *

Карталанать ирпе тĕтре.
Сив çилĕ çурçĕртен...
Кĕрхи чечек пĕрех хитре.
Вăрманăн тумĕ – шур пиртен.

Хура вăрман тĕтреллĕн юхнăн
Кĕрхи урăхланать тĕнче.
Шалл! тăкăнать сар çулçă курттăм,
Чăлтăртатать турат çинче.

Епле хитре ку ăрăм пурнăç
Хуплать пурне те çиттипе.
Тепĕр чухне хăрушлăх курнăн
Тарса ӳкес пек сиккипе.

Эп утăп хăвăрт шурă хумăн,
Чӳхенĕп сарă çулçăлла.
Калаçăп тепĕр хут эп шуххăн.
Эп пурнăп халĕ урăхла!

* * *

Паянхи пек пулман пулĕ ăмăр,
Пĕлĕтленĕ йăлтах тӳпене.
Пурăнма кун пек чух питĕ тăвăр...
Эх, тухасчĕ теп ирĕке!
Ирĕк пултăр тесе ĕнтĕ ĕçнĕ.
Савăнтарнă кăштах чĕрене.
Ак паян пĕтĕмпех эпĕ пĕтнĕ.
Çавă кирлĕ сана – чĕмере!
Питĕ йывăр пулсан та сывлатăп,
Пурпĕрех эп сиреп мухмăра!
Тӳпе çийĕн, курап, вĕçсе кайрĕ

Ушкăн кайăк çунат сарса...

* * *

Кăвакарнă тĕнче шăвăнать майĕпен,
Васкамастпăр эпир те – чăваш ачисем!
Çук, тумастпăр усал. Тупра кирлĕ мар!
Эпир йывăç пулса тĕреклесшĕн...
Йывăç пек те ӳссен... Нумай ĕмĕртен
Хамăра та паллаймăпăр эпĕр.
Ак, кусем, тесе калĕç иртен-çӳренсем,
Мĕнле пысăккăн килнĕ, тĕнче ачисем!
Халь вара сапалатпăр тума çĕр çине,
Кашни çул вĕт çапла хĕн тӳсетпĕр...
Тепĕр хут çур енне тăхăнар çĕнĕ тум.
Пултăр вăл чаплăрах киввинчен!
Ăт, çапла. Ма капла ӳкерет ку тĕнче
Шăнса кӳтнĕ тумне çĕр çине? –
Çĕр илет хăйне мĕн кирлине!

* * *

Шупашкарта каç пулса килет,
Çулçăсене çĕклекелесе çил вĕрет.
Çӳлти хула çути мĕлкеленет,
Çавăнпа та пулĕ пит илемленет.
Иртсе кайрĕç çумранах яш каччăсем.
Тен, хĕрсем кĕтеççĕ, тен, кичем?
Уттинче пур вăй питти, яртти...
Акă çитрĕ тĕлĕнтермĕш – каç пултти.
Каçхине шур Шупашкар таса.
Хураран таси те çук вара!

* * *

Çаралчĕ вăрман. Пушанчĕç уйсем.
Унта халь таса та çап-çутă.
Унта пуль çӳреççĕ чăваш туррисем?

Вĕсем те халь тин питĕ тутă.
Мĕн-ма илĕрттет-ха чуна çакă ырлăх?
Кăмпа та унта... Тен, мăйăр та пур?
Пушаннă вăрман пĕрех питĕ мăнтăр.
Пĕр сассăр тăрсан та пĕрех чунлăрах!..
Тăван çĕршыва çакăн пек эпĕ куртăм.
Уй-хирĕ, вăрманĕ, çырми те пуян.
Тен, çавăнпа çакăнта хама тупрăм?

* * *

Пытанать хĕвелĕм,
Çывăрать чĕрчун.
Ытă та тĕкелĕн
Курăнать халь кун.
Кăштă кулса илтĕм
Эп хĕвел пекех.
Тĕнчене эп килтĕм
Чăн та, кĕр пекех.
Ăмăр та пит сăнсăр
Тепĕр чух тӳпе.
Кĕр çинче ман сансăр
Чĕрĕлмест чĕре.

* * *

Вăрртăн çеç кĕтесри пĕр чечек
Кĕтсе илчĕ пире ирпе.
Тен, хĕвел тухасса вăл пĕлмен те,
Куçне хупнă йăлтах пĕтесле...
Ан хăра тĕл пулу пĕтесрен,
Чун пĕтмест нихăçан, кĕтнĕçем
Вăл татах та ӳсет ӳснĕçем.
Ак, хĕвелĕ килсен, уçса ярăн куçна...
Тен, туна те тӳрленĕ кăштах?
Каçхине хупласа шур чечек хăй питне –
Халь тинех хĕвел пек савăнать!

* * *

Утатпӑр эпӗр кӑптӑр-каптӑр...
Ҫав сасӑ юлчӗ-ши вара?
Ҫӳл тӳпери шап-шурӑ юр
Чӗлтӗртетет пек сывлӑшра.
Ҫак ҫут тӳпе шутланӑ евӗр
Тӑратпӑр эпӗр Турӑ пек.
Халь тин ҫак уҫлӑх анинче.
Сывлатпӑр тарӑннӑн... Чутах
Кулса ятрӑм... Пит ҫине
Ӳкеҫҫӗ пӗрчӗсем пӗр кассӑн,
Савӑнтараҫҫӗ ӳт-пӗве.
Халь тин хама туятӑп ҫамрӑк,
Вӗҫсе каятӑп юр пӗрчин!
Ҫак тӗнчери пӗртен пӗр ҫарӑк
Юлса тет йӑранра халь тин!
Кӑлар, апла, туртса, хӑватлӑн!
Эс, ҫарӑкӑм, халь тин тӑраннӑ,
Ҫӗр пулӑхне илсе тултарнӑ...
Хӗлле ҫавна ҫисе тӑран та
Каллех шутла ҫав ҫарӑк пек.
Эх, ҫарӑк майлӑ ҫут ҫанталӑк!
Каллех уҫать хӑй алӑкне.
Хальхи кӗрхи пек тутлӑ палӑк
Ҫукрах пуль пушӑ тӳпере.
Тӳпе вӑл уҫӑ, ним те ҫуккӑ.
Ҫав пушлӑхра шур юр кӑна.
Ҫӗре ӳксен вара вӑл пулӗ
Шур ӳтлӗ ҫарӑк пек таса.

* * *

Васкатать тӗнче, чуптарать –
Ҫаврӑнса та пӑхма вӑхӑт ҫуккӑ.
Укҫапа та кутпа асатарать –

Тепĕр чух çитерет çупкă.
Халĕ ĕнтĕ эс темĕн тусан та
Тĕнчене хăвна май çаврас çук.
Çын çĕкленĕ хура тусанран та
Çаннупа та куçна хуплас çук.
Мĕн-ха, мĕн халь çынна пĕтерет,
Кам алли-ха пăвать майран?
Пĕр сăмах, Тур сăмахĕ пурах,
Çав çăлассăн туятăп хама.
Авалхи пек ĕçре туптансан,
Эс пĕтместĕн вара пĕтĕмпех!
Чыс та ĕç – çав кăна тĕнчере!
Ĕçлĕ чух пурăнатăн вара...

* * *

Сивĕ, сивĕ, сивĕ...
Сивĕ мĕншĕн пур?
Шартлама сивĕре йывăç евĕр
Шартлатса çурăлать тĕнче.
Унăн ванчăкĕ мар-и шур юрăн
Шуррăн ӳкрĕ турат çине.
Сивĕ мĕн вăл, пĕлет çут çанталăк.
Сивĕре вăл туптать чĕрине.
Тепĕр чух чăнласа та вансассăн,
Юр пулса çеç ӳкет çĕр çине.

* * *

Çын пекех пăхать пит тимлĕн.
Юмахра пуль ку?
Çеçкере çуралнă пулăм,
Тĕнчере те пур.
Эс унта çӳрен ача пек,
Ху та пĕр чечек.
Тепĕр чух мĕнне пĕлмесĕр
Такăнса ӳкен.

Такăнса ӳкме тем мар-мĕн
Чечек умĕнче.
Чечеке пăхса илсен те
Хăтăлать чĕре.

* * *

Пĕчĕк çеç пĕр йывăç,
Пальма пек темскер.
Çулçисем пĕр ывăç,
Питĕ тӳрĕскер.
Эс ăçтан-ха килнĕ?
Мĕн тăван кунта?
Сан тавраш, тет, вилнĕ
Сивĕпе шăнса.
Эсĕ те пĕтетĕн
Ютă вырăнта.
Çавăнпа хĕрхентĕм
Санăн пурнăçна.
Сана кирлĕ урăх
Урăх çĕр, тĕнче.
Вĕсенче эс ӳсĕн
Ашкăрса кăна.

* * *

Сивĕрен те сивĕ пурнăçра
Ăшăнма пĕлес пулать.
Хăратса пĕтернĕ чунăмра
Çав ăшша тупас пулать.
Шăнса кӳтнĕ чух ытла аван.
Тутлă вилĕм çывхарать.
Ун чухне ача пек çывăран –
Пурнăçу вара сан татăлать...
Сивĕрен те сивĕ пурнăçра
Ăшăнмалăх туп хăвна.

* * *

Çĕр çинче çутăсем нумай.
Çын çути те çук мар.
Тутара йăлтăраççĕ кăна...
Эп çутни, тет, вара ăçта?
Çывхарса та килет, ак, çутă.
Кам çутса тет вара ку çутта?
Турă мар, турăсем халь çуккă.
Çакă çутă чĕрешĕн тутлă.

* * *

Вăрман варринче
Шур юр айĕнче
Пĕр чăрăш ларать,
Çывăрать.
Ташлать ун тавра
Мулкач та пакша.
Вăрантăр упа та,
Янратăр вăрман!
Шур юрĕ çăвать те
Турат усăнать.
Çĕн çулĕ килет те –
Килет те каять.

* * *

Симĕс чăрăш тăрринче
Çут çăлтăр çиçет.
Тĕрлĕ-тĕслĕ çутинче
Юр пĕрчи вĕçет.
Чăрăш тавра ачасем
Тем кĕтеççĕ пек.
Çĕн çул чупса килнĕçем
Татах ӳсрĕç пек.
Тем тăвасшăн, тем ташласшăн

Çамрăк чун татах.
Ташласа алă çупсассăн,
Чун ӳсет, паллах.

* * *

Кăшт сывлать-ха манăн чăрăш,
Тутлă сухăр шăршĕпе.
Ун тавра чупма эс чарăн,
Унсăрăн пĕтен ирпе.
Йĕппине йăлтах тăкать те
Сывлаймасть текех.
Йĕп çинчи пек чун пулать сан,
Юр пĕрчи пекрех.
Эсĕ сикĕн, эсĕ ташлăн
Çурçĕр çитиччен.
Кивĕ çул иртсен те калăн,
Сывă юл эппин!
Çĕн çула эс сывлăх патăн
Сывласа кăштах.
Чăрăш йĕпписем пурах çав
Ман чунра та халь.

* * *

Яколев ячĕ паян
Ирпе ир-ирех янăрарĕ.
Тахçан авалхи пек аран
Чăвашăн çĕршывĕ вăранчĕ.
Чăн Турă ятне илтсенех
Кăртах сиксе илчĕ чĕре –
Яковлев Турă иккен!
Ку таранччен пĕлмен-им?
Сăпайлăн кăна курăнать...
Каланă сăмахĕ те пурччĕ!
Камах пулĕ халь ас тăвать?
Сăмахĕ ун пулнă чăн хурçă.

Çав хурçă та халь тутăхать...
Пĕрех, ирпеле, ăнсăртран
Çав сасă каллех янăрарĕ.
Апла, Турă пур. Уçлăхран
Пире вăл тепре шăнкравларĕ.

* * *

Чунра питĕ лайăх паян.
Паян ачасем пит пуян!
Туянчĕç вĕсем паллăсем,
Чи лайăххисем!
Экзамен тени кулă мар,
Пĕлеççĕ вĕсем начар мар.
Семестр тăршши тăрăшни
Сая каймастех вĕт, атьсем!
Сире саламлатăп, туссем.
Эсир савăнтартăр мана.
Халь тин хăрамсăр татах
Мала вĕçтеретĕр кăна.

* * *

Пурнăçра урăх ним те çуккă. Çуккă!
Пурнăçра пурнăç пур. Çавă çех!
Тепĕр чух туянсассăн çупкă,
Пурнăçран тухса ӳкнĕ пекех.
Эх, вара çил пекех хускалатăн.
Шыв пекех юхнăçем шухăшлан.
Мĕн тесе мана пурнăç вăратрĕ?
Çывăраттăм-çке питĕ аван...
Анчах çупкă пани те иртет мĕн.
Пурнăçпа каллех пурнăç тулать.
Тепĕр чух çавăнпа та пĕр уссăр
Пурнăç иртнĕ пекех туйăнать.

* * *

Шурă кĕрт çине пусса
Куртăм эп паян.
Юр çумашкăн пуçласса
Эп кĕтсе нумай.
Акă, пусрăм. Лăшш! кăна
Ман ура путать.
Çĕрĕпе пулса тăман.
Халь те алхасать!
Акă, килчĕ тӳперен
Юрлă çавра çил.
Вăл мана ӳпĕнтерет,
Эс, тет, вырт та вил.
Çук вара! Эп хам та çил,
Эпĕ хам тăман.
Юр пекех вĕçетĕп, пĕл,
Çил пекех урсан.
Урараан, ак, ӳкрĕм вĕт,
Юр хӳсе каять.
Тăманра тухсассăн, тет,
Çул та çухалать.
Кĕрт ишсех тухатăп эп.
Çул тăватăп халь!

* * *

Çын умĕнче чăн ухмахла
Тен, сан, чăнах та, пулмалла.
Ун чух вара, «ухмах ку!», тетчĕр.
Санран кăна пĕр вĕççĕр кулчăр.
Тепĕр чухне çав пулăшать.
Ухмах çумне пырса тăрсан
Ăсли те пуль ухмахланать –
Вара тĕнче тукмакланать!

* * *

Кĕркунне килсе çитрĕ каллех.
Çав тĕлтех, ĕлĕкхи çул çинчех
Тĕрлĕ тĕслĕ сар çулçă çиçет,
Çил ăна хĕвел шайĕн çĕклет.
Çулçă витĕр курап сан сăнна.
Çулçăра халь тĕнче çаврăнать.
Чăн çулна çулçă витĕр хывсан,
Çĕнететĕн пуль тетĕп хăвна...
Çулçă витĕр тухсассăн вара,
Эпĕр кайăпăр çăлтăр тавра
Çаврăнса, çаврăнса, çаврăнса...
Кирлĕ мар вара ним те мана...
Алăра çулçă евĕр çемçе
Тепĕр алă мана ăшăтать.
Куçунтан кун çути сăрхăнать.
Çулçă тĕслĕ тĕнче таврара
Çаврăнать, çаврăнать, çаврăнать...
Чун чуччу, çулçă пек, ярăнать.

* * *

Мĕн асăрхарăм пурнăçра?
Чăн юрату та пур, чăнах!
Вăл вилĕмрен те вăйлăрах
Илме килет чуна.
Эпир пĕлместпĕр, юрату –
Вăл тĕрлĕрен пулать.
Кĕлпе тин витĕнчĕ кăвайт –
Пăлхатрăн та... кăвар тухать.
Хăш чух куçа вăл курăнмасть,
Алларан тытсан та ăшăтмасть.
Мĕн чухлĕ пуль чĕре тапмарĕ,
Кăвар çунсан та тупаймарĕ –
Чăн юрату пĕрре пулать!

* * *

Çак тĕнче юратусăр пулман-тăр,
Юратас тесен, кĕр çылăха.
Турă хăй те малтан, мĕн тăван-ха,
Çылăха кĕнĕ пуль çăтмахра?

Авалхи Ева евĕр пулам та
Адамран чăн арçын тăвам.
Панулми, пиçнине, татам та
Çыртăкне, ак, сана парам!

Ахальтен-и вăл лартнă пулать-ха
Пурнăçа паракан йывăçа?
Çимĕçне ас тивсен, мĕн тăван-ха
Усала та ырра ас туса...

Тахçанах çак тĕнче, шутла-ха
Ырăпа чăн усал хушшинче.
Çăтмахри сукмака такăрлат та
Хăвна туп ырă çын çумĕнче.

Çак тĕнче юратусăр пулман-тăр.
Юратас тесен, кĕр çылăха.
Кам тута тутанса пăхмасăр
Туйса куртăр-ха ку çăтмаха?

* * *

Ача чух анчах çав пуринчен аванччĕ.
Пурнăçра мĕн пурччĕ – пурте ман ал-
раччĕ...
Вĕçтĕрех-и, терĕм, тытнă кайăка
Ывăçа уçса та ятăм кăларса.
Халĕ вăл вĕçет-тĕр тĕнчере хăй тĕллĕн.
Çуркунне килсен те юрласа парать-тĕр.
Вĕçтĕр ĕнтĕ, мĕн вăл, алăри телей –

Юрăра, илтсессĕн, юрату пулать-тĕр!

* * *

Пулать тепĕр чух тĕл пулу пурнăçра
Çурхи аслатиллĕ ăш çумăр пекех...
Çырма тĕпĕнче пĕрле ӳснĕ йăмра
Пыллă пулас ĕмрипех!

Шăнкăр та шăнкăр! пĕве пуçĕнче
Шыв тăкăнать чул çине.
Анăп каллех шак чул пуçтарма
Тăмлă çыран хĕррине...

Ватă йăмра пуç тайса авăнать,
Çил вĕрнĕçем, шыв çине.
Халĕ те пулĕ тăри ас тăвать
Катăк шăхлич сассине...

Иртрĕç кунсем, иртрĕç çулсем,
Юхрĕ çут шыв çырмара.
Икĕ ачан, тĕл пулсан, чунĕсем
Шак вылямалăх пурах!

* * *

Миçе çул ĕнтĕ найкăшмасăр
Тытса пыратăн кун-çулна.
Тилхепине кăртах туртмасăр
Тĕрĕс пыраймăн çав çулпа.
Çапла вăл пурнăç... Аллунта
Сан упăшка та пĕр ача...
Телей тени вăл çавăнта.
Çавна кĕтсе тухса качча!
Çук, телейсем те çуккă сан.
Пĕр йывăр ĕç, пĕр ĕç пĕрмай.
Çав ĕçсене туса хурсан,

Хӑвна туятӑн кӑшт самай...
Ӗҫрен килсен, эс йӑлл! кулатӑн, –
Пире курсан ҫапла тӑватӑн.
Кӗтретлӗ килтӗрччӗ вара
Сан пурнӑҫу ҫав самантра!

* * *

Телейлӗ тесе калаймӑн –
Ку кун та килет вӑрах.
Пӗр пус та килте юлман-тӑк,
Чӗре кӑшкӑрать – хурах!
Хурах кӑшкӑратӑн хӑватлӑн
Хура курак пек пӑртак.
Вара темӗскер тӑваслӑн
Вӗҫетӗн таҫта татах.
Вӗҫетӗн те тем шутлатӑн,
Тӗнче вӗт пӗтмен-ха паян.
Хӑвна ахалех хурлатӑн –
Курак пек эс пул-ха хурах!

* * *

Ӗнер эпӗ лекрӗм таҫта.
Темле пӗр тӗнче. Кунта мар.
Унта ирпеле анӑҫран
Тухать ик хӗвел ним те мар.
Ик хӑмӑр хӗвел... Ниҫта та
Тарса пытанаймӑн унран.
Манма та май ҫук. Пытанма та...
Пӗрмай вӑл санпа, сан чунра.
Ик хӑмӑр хӗвел нихӑҫан та
Каймасть ӗнтӗ тек... тӳперен.
Нихҫан та анмасть анӑҫа та...
Мӗнле тӗнче пулчӗ вара ку,
Тесе те ыйтатӑп хамран.
Куҫа та хупма май ҫук вӗт.

Хупсан та усал пулас çук!
Ик хăмăр хĕвел халь уçлăхра.
Çурхи кун килет пуль, ара!

* * *

Епле юратуллăн та ăслăн
Хĕвел аллине тăсса пачĕ.
Тĕнче шăннă çут кантăкăн
Асамлăн çиçсе çуталчĕ.
Пăрланнă тĕлте халь, чăн та,
Хĕвел пĕчченех хуçаланчĕ.
Çӳрерĕ алли пит ачашшăн,
Кашни йывăçа хыпашларĕ.
Шăнса кӳтнĕ пичĕ тăрăх
Куççуль çурхи пек юхтарчĕ.

* * *

Такам çул хырса панă
Пĕр кĕреçе кăна...
Темле шăплăха путнăн
Çав çул туйăнать мана.
Ирпе халь никам та çук-ха,
Хуллен вăранать хула.
Умра вара такăр
Такам хырса хунă çул...
Тен, çав, çил пекех, уççăн,
Чуна çĕклесе вĕçтерет.
Тен, хывнă çак йĕр хыççăн
Татах ырă çын килет?

* * *

Çĕнĕ çул чăнласах пуль çитрĕ.
Шурă юр тĕнчене йăлт витрĕ.
Шурă-шурă, шап-шурă хурăн
Хĕл палли пуль, ытла та шурă...

Шурă тĕс вилĕме теççĕ,
Шурă тĕс каясса пит кĕтеççĕ.
Шурă лайăх та... питĕ сивĕ –
Çавă пуль ман чуна тиврĕ!
Пĕр хура муклашка пек эп халĕ.
Пырса тап та салат вирлĕн.
Тапса пăх-ха, хăвна ыраттарăн,
Мулкач евĕр сиксе та тарăн...
Эп вара тăрса юлăп хыттăн.
Хĕл сивви мĕн чухлĕ ытлă,
Çавăн чухлĕ эп пулăп Улăп!
Эп иртен-çӳренрен те кулăп:
Сивĕ хĕл çавăн пек вăл вăйлă.
Шур юрпа çеç сив хĕл сăйлă.
Шурă тĕс вăл чăнах пуль вилĕм,
Шур кĕртре-ши чăнах ман килĕм?
Çуркунне киличчен-и-ха пулĕ
Хĕл тăршшиллĕ çав вилĕм çулĕ?

* * *

Хура каç куçăма хуплать.
Ман тавра халĕ нимĕн те çуккă.
Паллă мар кам мĕнле пурăнать.
Мĕн тăвасшăн тĕнче çак самант? –
Паллă мар, çав сана хăратать!
Суккăр çын пек пыратăн хытса,
Хыпашлан çак çĕре урупа.
Çĕр кăна халь тĕрек парать!
Тăнкăлт-танкăлт! каян тепĕр чух –
Çĕр çухалнă чухне ку пулать.
Ланкашка-и унта е çырма,
Халь пĕлместĕн вĕт-ха нимĕн те!
Çĕтсе кайрăм пулас... Эс ăçта?
Хăвна ху шыраса эс тупатни?
Хыпашла эс хăвна çĕр пекех!

Çĕр пекех эсĕ ху та хура –
Мĕлке евĕр пыран аташса...
Хура каç тĕнчене йалт хуплать.
Ним те çуккă халь ку тĕнчере.
Хура каç е хуранчăк мĕлке...
Çавă çеç-и вара халь юлать?
Çуккă пуль. Эп шанатăп хама...
Эп çухалнă пулин! Эп çухалнă кăна...
Шурăмпуç çуталса ак килсен,
Ун чухне çак тĕнче те килет!

* * *

Ах, çулла, çуллаçăм,
Сан çинчен çырманччĕ...
Йывăç çулçă сарнă,
Тем çырса хăварнă...
Пырăттăм та вулăттăм,
Йывăç евĕр пулăттăм...
Ман тавра çулла вĕт,
Çу тулса пырать вĕт!
Çитĕ тепĕр вăхăт...
Кĕркунне паллийĕ
Палăрать те мар-и?
Пĕр çулçи саралнă –
Çу иртет тесе,
Каласа хăварнă.
Ах, çулла, çуллаçăм,
Тутлă пыллă кун!
Нивушлĕ каятăн,
Тулса çитрĕн пуль?

* * *

Каллех килет çуралнă кун сан...
Çавна туйса тăратăн-ши?
Пуçа пĕксе шутлатăн та,

Кăштах çамку пĕркеленет...
Епле-ха эсĕ, чун йăпатмăш,
Çырма пултартăн çакăн чул?
Пуçна пĕксе тăмарăн çав!
Тĕнче сана хĕстернĕ чух
Пĕрех çĕклентĕн питĕ шух.
Шăрантарать куна сан сăвă:
«Нихçан ан пĕттĕр, тет, тĕнче!» –
Çапла шутлать пуль Хусанкай,
Хăй вырăнне вырнаçнă май?
Тĕнче те курчĕ, хăй те пăхрĕ...
Тăранаймарĕ, курăнать.
Татах, татах вăл шухăшлать:
«Мĕн-ма тĕнче чăваш пек мар?»
Тĕнче çын аллинче, пĕлмен-им,
Халь мĕн тăвайăн, Хусанкай?
Çĕклен-ха тепĕр хут хăватлăн,
Сăвву янратăр çĕнĕрен.
Чĕрĕ пекех аллу-уру та
Утса та кайăн тепĕр хут.
Çапла, çапла, çак тĕнче майлă
Пулсам эс ху та тепĕр чух!

* * *

Çак тулăхсăр вăрçлă кун
Ăçта пурăнать-ши ман чун?
Тен, чун вырăнне халь чул?..
Çав чул айĕнче пулă пур!
Тытас пек çав йăпăлт пулла
Эп кун тăршшипех чупкалатăп.
Пулли вара, паллă, чула
Хăй кил вырăнне шутламас та!
Чул хыççăн чула ухтарап,
Чула çут шывран кăларап...
Тен, чулсăр тăрса юлсан,

Пулла çăмăлах эп тытап?
Ак, чăн та, пĕр чулсăр шыв –
Тĕпне юшкăн тулнă пуль? –
Пĕрре ярса пусрăм, тепре...
Çĕкленчĕ таçтан çĕпре.
Пулли кăна мар, алли те халь çук!
Çăра та пăтранчăк шывра
Халь ĕнтĕ ман чул вырăнне
Юлса пĕр çăра ланкашка.
Ах, пулă тесе мĕн турăм пулать?

* * *

Пĕрле ларма чĕннĕ çанталăк
Пĕр йĕчĕ те пĕр уларĕ...
Йăтса килчĕ юр пĕр ытам...
Эп ларнă çĕрте, халь, курăр,
Шур кĕрт сăрт пекех аван.
Çав сăрт çинче эп те лартăм,
Сыларăм тăман пек çил май.
Çанталăк хăех хуравларĕ –
Эс лар, терĕ. Лар, лар!..
Ларсан та ларсан ак, чăн та,
Эс пулăн та кайăн пĕр сăрт.
Аллу-урусем кăна мар,
Эс ху та пулан çутă пăр!
Çак пулчĕ çанталăк хуравĕ.
Хуравĕ тек кирлĕ мар!
Çиле итлеме питĕ майлă,
Пит тутлăн эс халь çывăран...
Чăн-чăн хутлăхра çапла пуль,
Унта пуль юмах та çăтмах...
Çапах та, вăй хутăм та – тăтăм...
Вилетĕп вĕт, терĕм, ларса!
Темле питĕ тутлă тĕнче те
Мана тек тытаймĕ кунта.

Шур сăрт çине тăтăм асаплăн,
Çил майăн кăштах сулланап...
Кирек мĕн пулсан та ху тĕллĕн
Тухатăн тăван кил тĕлне...
Халь ĕнтĕ вăйлантăм, ман чунăм
Кунта вĕçленмест-ха, курап.
Тăман та сывлать ассăн,
Сив çил те каллех çывăрать...
Мана вара çиттĕр... Эп кĕтнĕ,
Эп кĕтнĕ самант çывхарать.
Эп хам та халь чаплă çанталăк,
Эп хам та тăман кăларап!
Тута шăхăрать шухă çилĕн,
Умри шур юра хускатать.
Ура такăнать те шур кĕрчĕ
Юхха пек тавра çаврăнать.
Çапла утса пытăм пĕр йĕрсĕр,
Пĕр çулсăр, тĕллевсĕр, аран...
Шап-шурă уй тăрăх, курман-им,
Эсир аташса пырса?..

* * *

Кун пек хисепре эп пулманччĕ.
Мана юратманччĕ кун пек.
Эс, Турă, тесе каламанччĕ,
Чĕре ирĕлменччĕ çу пек...
Тата, ак, кĕтмен çĕртен
Пĕр кăкăр тулли чун!
Хăш чух темĕнле кĕтсен те
Килмест вĕт-ха кĕтнĕ кун.
Кунта вара, ак, ал айĕн
Юхать шурă кун çути.
Çак пулăм текех килеймĕ,
Çути вара юлĕ, тен?

* * *

Çапла пуль, мĕн пултăр урăх
Шăл çыртнă шап-шур тĕнчере.
Пĕрне пĕри ырă пултăр,
Тесех те тăмастпăр пĕрле.
Кулма тесен, кулă та кирлĕ...
Чĕре юрри пек пĕр кана
Кулатпăр вара питĕ вирлĕ –
Çав кирлĕ сана, ухмаха!
Вар-хырăм вара чул пек хыттăр,
Çемçелтĕр чĕре сар çу пек...
Кулса пĕтерсен, кулă хыççăн
Çын евĕр пулатпăр-и, тен?

* * *

Пĕр пурнăçран тăратпăр эпĕр.
Пĕр пурнăç пулнă тет тахçан.
Пĕр пурнăç пек пулас тесессĕн,
Ăна тăвас пулать паян!..
Çак пурнăçа, шутлатпăр, панă
Пире туса такам, тахçан...
Ку тĕрĕс мар, йăлт хамăрах
Ăна тăватпăр халь, ялан...
Кашни самант, кашни пĕр шухăш
Вăл çыхăнать пуçламăшпа.
Пуçларăн-тăк, каллех пĕр хушă
Эс пурăнăн çав пурнăçпа.
Анчах каллех çав пурнăç пĕтĕ.
Кивелĕ вăл та, кайнăçем...
Тен, çавăнпа та питĕ вирлĕ
Чăваш тăвать çĕнĕ чӳксем.
Чӳк тунă чух тĕнче вăраннăн
Пулса илет пуль çав, чăнах.
Пăхса илет усал хаяррăн,
Ырри те уксахлать татах.

Шывне тăкать-и Турă евĕр,
Е вĕçтерет çеç çеçкине.
Кашни хусканăвĕ, пĕлсемĕр,
Ас илтерет Çĕр тунине.
Çапла вĕт, пулнă, тет, çырса та
Библи çине мĕн авалтан.
Шыв çийĕн сăрт-тусем тухсан та
Кайăк вĕçсе вĕт чăн малтан!..
Тен, çавăнпа ниме пăхмасăр
Чăн Турă пек чăваш тăрать.
Кашни кунах пĕрре канмасăр
Кив чӳк туса çĕн ĕç тăвать.
Е тепĕр чух, вăхăт çитмест-тĕк,
Тупать вăл меслетне пăртак.
Кăмăл килмелĕх пуç таять те
Калать пĕр-икĕ ыр сăмах!
Çав ыр сăмах та питĕ çирĕп
Тытса тăрать пек тĕнчене.
Кам калаçмасть, çавсем пит чирлĕ
Çын пек тухаççĕ кун умне.
Эп çавăнпа, тăван, кив чӳкшĕн.
Çĕнĕ тĕнче тăвас тесен,
Пĕтĕм чунтан пĕрре эс ӳкĕн,
Тепре вара татах çĕклен!
Çын мăшкăлне вара аран
Сирсе те ярăн хăвăнтан!
Ырра чăтма пĕлменнипе
Усал пырса çапса çурать.
Усал кăна асать пĕрмай.
Турă пĕрмай шăпа çырать.
Анчах шăпи, куран, темскер,
Тур çырнă пек килсе тухмасть.
Апла, çырни те кирлĕ мар!
Эпир, тен, хамăр Турă майлă
Туса хуратпăр пысăк ял?!

* * *

Пĕрремĕш чечек, куртăр-и,
Чĕре пек хитре çав тери.
Çурхи шыв юхать çаврăнса,
Пуçа вăл ярать çавăрса...
Ах, чечек, чечекĕм, хĕр чĕри,
Юрату тумашкăн кирлĕ çав тери...

* * *

Ай, хай, пурнăç иртет, пурнăç иртет...
Вăхăт иртни пĕтерет!
Ĕнтĕ пирĕн пурнăç çинчен
Шутлама вăхăт çитет.
Пурнăç тени, мĕн тени?
Ача чухне калатчĕç –
Пурнăç тени кулă мар!
Халĕ вăхăт иртрĕ те
Мана ним те кирлĕ мар.
Пăхкаласа выртнă чух
Сентре çинчен ӳкес мар!
Ай. хай, вăхăт иртрĕ-çке,
Шутлă кунсем юлчĕç-çке...
Ун пек чухне мĕн тăвăн, –
Пуçа çапса кĕл тăвăн.
Вилĕм куçран пăхнă чух
Тур пуррине чухлатăн.
Ялтан тухса кайсассăн,
Ăçта выртăн, пĕлместĕн.
Ĕнтĕ эпĕр пурте харсăр.
Çамрăк чухне ăссăрла
Тем те тунă пулĕ, ахăр,
Тен, пире ылханнă та...
Халĕ тин пире каçарччăр,
Эпир хамăр та халь ватă.

Çавăнпа та çула майăн
Ал сулсах ăсатăр-ха.
Вăхăта сутăн илеймĕн,
Вăхăт хăй вăл калĕ-ха!
Тен, ăна тăсма пулать пуль
Ĕмĕрлĕх пĕр ĕç тусан.
Пĕр çав ĕçшĕн, паллă ĕнтĕ,
Çамрăклах пĕтеççĕ те...
Ман вара, ман вăхăт пур-ха
Çав ĕçе туса хума.
Вăл ĕçе эп пуçăнман та,
Вилĕме кура кăна
Эп ăна пуçлатăп-ха.
Вăхăт çитрĕ, чăн та, чан пек
Чан-н! çапать пек хăлхара.
Ку чăн пек пулса тухсан та
Ас тивме кăштах тăхта!..
Тураса пĕтернĕ кунăм
Тăварлантăр купăстан!
Ун чухне вара мĕн калăн,
Çиме лартăнах пулсан...
Ай, хай, пурнăç питĕ йӳçĕ,
Купăста пек йӳçрĕ-çке!
Кам-ха калĕ, вăхăт йӳçĕ –
Çулçă евĕр вĕçрĕ-çке!

* * *

Тахçан ача чух, пĕр хуçнă турат
Чунра ларса юлнă пулас кăштах...
Тен, çавăнпа та паян эпĕ хăвăрт
Пĕр-икĕ турат хуçса килтĕм татах.
Пĕр лартнă турат килтен çухалмасть.
Вăл йывăç пекех ӳсет ман ăшрах!
Кашни çул çапла хуçса лартнă турат
Турат çумне хушрĕ туратăм татах.

Халь ёнтĕ вăл пысăк, темле лапсăркка,
Ун çийĕн çӳрет пуль ман чун аташса.
Тен, çимĕç те панă, тен, çинĕ те пуль.
Çисессĕн, тен, кĕнĕ авалхи çылăха?
Çавна пуль пĕлсе халĕ кăчкă тухать...

* * *

Мăн асатте тахçан лартнă йăмра,
Хăрса çитнĕскер, çырма урлă
Тинех пĕрлештерчĕ ик çырана...
Выртать пулĕ халĕ хăрах.
Йăваннă чухне, çил вăйлансан,
Тен, кăшкăрнă пулĕ – хурах!
Анчах та патне никам та пыман.
Тăвăллă чух çын чунĕ çукрах...
Ун пеккисем, чăнах та, пайтах!
Пĕр чунсăр юлсан, чăнах та,
Хăвна эс туян йывăртарах...
Çапах та эс калăн: ним мар!
Пĕр кут та пĕр пуç – урăх килмар!
Çӳретĕн вара пĕр кĕлеткен...
Мĕлке пек каçпа йăлт пĕтен!
Çак кун та кайсассăн, тĕттĕмре
Пĕлеймĕн хăвна та, ху камне...
Пĕр çутăсăр юлнă çак тĕнчере
Çутă шырать пĕр чĕре...
Темскерĕ каçпа хаяррăн тухать,
Сиксе ӳкес пек карăнать!..
Ак, ухă та ячĕ... Сăнни
Тӳрех тăрăнать... Чăнни
Тинех палăрать, юн тухсан.
Ну, мĕн, манса кайрăн пулать?
Кун хыççăн кун хăвăрт шăвать.
Шуса тухса кайрĕç чунсем,
Шуса пырса кĕчĕç ютсем...

Халь ёнтĕ эп хам та çич ют.
Мана кирлĕ мар ют çурт.
Тапатăп, вататăп... Халь аслă эп тин,
Ман пек чăвашах пĕр çĕр пин!
Эп хам пин-пин-пин...
Юрлать кăсăя тин-тин-тин!
Яла килсе çитрĕм тин.

* * *

Шăпчăк тесен, аса илетĕп
Тӳрех ялти пĕр çӳл сăрта.
Çав сăрт çинче пĕр ушкăн кайăк
Юрлатчĕ пулĕ çĕрĕпе...
Эпир вара, айван ачалăх,
Уйăх çине йăва тума
Вĕçеттĕмĕр пĕр çунатпа...
Тен, çавăнпа кĕрсе вырнаçнă
Ман чĕрене çав юрăсем?
Çав юрăсем ял çийĕпе те
Вĕçеççĕ халь те темĕн чул?
Ăт, халь çав йăвари пĕр шăпчăк
Вăхăт çитсен вăранчĕ те
Шип-шип те шăпăртак тăвать,
Чĕнет çав çӳлĕ сăрт çине.

* * *

Эп кая юлса пыратăп
Çут çанталăкран.
Чĕкеçсем çӳлте, куратăп,
Килнĕ-мĕн тахçан.
Çут çунатлă, çавра саслă
Пăнчă тӳпере.
Çавăнпа пуль эп те аслă
Çакă тĕнчере.
Эп ăна килет пуль тенĕ

Кăштă каярах.
Юррăма та хатĕрленĕ
Юрласа шăпрах.
Акă, куртăм, халĕ ĕнтĕ
Кăшкăрсах ярап.

* * *

Пĕлтĕрхи вăррине те тăкман-ха,
Пĕлтĕрхи пурнăçпах пурăнать.
Вăррине халь тем чухлĕ тăксан та,
Мĕн шăтни таврара курăнмасть.
Хĕлĕпех вĕт вăл ларчĕ, мăнтарăн,
Алка çакнă сар хĕр пек пĕччен.
Тен, ăна такамсем куçăхтарнă,
Качча панă пек тунă та, тен?
Тепĕр кун уйрăлса тухса тарнă,
Хĕр пуçпах киле таврăннă, тен?
Туй тумалăх сăри йӳçсе кайнă,
Тек килтен те тухман пулĕ, тен?
Çавăн пек эпĕ куртăм сутмалăх
Пĕр сар хĕр пек ларан йывăçа.
Тупсăмне те унне тупмалăх
Вăррине те илеп ывăçа...
Вăр! кăна ывăтатăп вĕçмелĕх,
Çил ачи илсе кайтăр тесе.
Вăрă, чăн та, темле кайăк евĕр
Вĕçсе кайрĕ чылай инçе.
Халĕ тин сывласа илет-и,
Хĕлĕпе йĕрсе ларнă çав «хĕр»?
Каччи кам пулнине те сисет-и,
Ак, каллех вĕт килет хура кĕр!
Эх, унччен чăн малтан ларатчĕ
Симĕс-шурă черчен çеçкере!
Вăррине те татах кăларатчĕ
Вăт çапла çил çинче вĕçтерме.

Ун чухне вара питӗ чаплӑ
Тепӗр хут килсе тухӗ-ха, тен?
Ҫав ҫурхи кӑмӑла упрасчӗ
Сарӑ хӗр тепӗр хут киличчен.

* * *

Хумлӑ-хумлӑ ҫӗр-сывлӑш чӗтреннӗ чухне
Эпӗ куртӑм пӗр хӗр, пирӗшти ку тесе.
Авкаланчӗ хитрен унӑн шур кӗлетки,
Ал ҫине тухса ӳкрӗ пуль кӑмрӑк пекки
Хура куҫӗ те пичӗ... Тытсан питӗнчен,
Ун тути те епле авкаланчӑк!..
Вылянать ал-ури, талпӑнать пуль чӗри,
Тӗнчене вылятасшӑн тапса ҫав тери.
Акӑ вӑл ҫывхарса-ҫывхарса пычӗ те,
Ыталасшӑн мана пулчӗ те...
Йӑлт ҫухалчӗ ҫав тӑнӑ ҫӗртен самантрах.
Халь инҫет те таса... Вылямасть тек ӑр-
ша.
Ӑшӑрханнӑ чуна тек кӗмест хӑратса.
Ӑрша хӗр, ӑрша хӗр эпӗ куртӑм пулас,
Ҫав ӑрша ӑша кӗчӗ пулас?
Халӗ ӗнтӗ унпа мӗн тӑвас?
Те кулас, те тарас... Е тытса чуп тӑвас?
Вӑл куҫа та вӗт халь курӑнмасть!

* * *

Иккӗнтен тӗл пулчӗҫ,
Хире-хирӗҫ тӑчӗҫ.
Халь пӗри шап-шурӑ,
Тепӗри – хура.
Кӗмпӗр-кӗмпӗр турӗ
Ҫав хуранчӑк чунӗ.

Шăпчăк пек сас пачĕ
Шур пĕркенчĕкли.
Иккĕш тăчĕç-тăчĕç
Кăшт вăрçкаласа.
Вăрçăсăр пулмасть çав
Çак юратура.
Çавăнпа-ши тăкрĕ
Хура куççулне.
Тепĕрин куççулĕ –
Тăкăнчĕ çеçкен.
Хуп-хура çав пĕлĕт
Ӳкрĕ тин çĕре.
Тепĕрин пĕркенчĕк
Выртрĕ çĕр çинче.
Çавăн пек пĕр пулăм.
Куртăм çуркунне.
Тен, куççулĕ витĕр
Пăхрĕ-ши тĕнче?
Çумăр иртрĕ хăвăрт.
Халь ăçта тет пĕлĕт?
Вăл вылять чĕтревлĕ
Улмуççи çинче.

* * *

Ай! хăрушă иккен май уйăхĕ.
Ирпе тухрăм та сивĕ çапать.
Сар хĕвелĕ кăштах куçне уçнăн
Ăшăтасшăн пекех хыт пăхать.
Сивĕ çил хыççăн ăшă çупкă
Халь пите те куçа ачашлать.
Çавăнпа эпĕ пурлă-çуклă
Малалла пĕр сукмак-çех хывап.
Çав сукмак çумĕпех пур-мĕн
Çеçкене тин çеç ларнă тирек.
Çеçкине курсан, калăн: хурт ку!

Йӑраланчӗ ура айӗнче...
Ку тирек те кӑларнӑ ҫулҫӑ.
Ҫу пуль сапнӑ ҫулҫи ҫине.
Ҫут хӗвел ҫуттипе вӑл ҫуттӑн
Йӑлтӑрать халь ман куҫ умӗнче.
Ҫуллӑ ҫулҫӑ... каларӑн та ҫав!
Сар ҫу ҫӑтнӑн тӑрать ҫуркунне!
Ҫавӑнпа ӑна куҫӑм саврӗ,
Ҫавӑнпа килӗшет ҫын чунне.
Шӑпчӑка, тен, манса хӑвартӑн?
Шӑпчӑк ларнӑ турат сулланать.
Хуҫса ил те ӑна эсӗ лӑпкӑн,
Хӑвӑрт ҫеҫ хӑвна ҫеҫ туртса ҫап!

* * *

Эпӗ нимӗн те, нимӗн те ӑнланмастӑп.
Пӗрех сирӗн пек никама та сутмастӑп.
Чипер тӑнӑ ҫӗртех, тутӑ та укҫаллӑ чух-нех
Эсир чӑваша тапӑнатӑр тӳрех...
Вӑл мӗн, сирӗн шутпа, мӗскӗн те кичем.
Чӗлхӗре чараймасӑр калатӑр – йӗксӗк.
Ҫав вӑхӑтра, каланӑ чух, ҫӑвар тулли ҫиеттӗрччӗ.
Чӑваш ҫӑкӑрне ҫинӗ чухне карланка мӗнле лармастчӗ?
Укҫине те кӗсье тулли пӗтӗрсе чи-кеттӗрччӗ.
Кӑмӑл тулли лӗхӗл-лӗхӗл туса кулат-тӑрччӗ.
Чӑваш пакӑҫ, ухмах, кӗвӗҫ теттӗрччӗ.
Ҫавна, хырӑма тӑрантнӑ чух, ӗненсе лартнӑччӗ.
Ямӑта хӑнӑхнӑ ҫыншӑн ӗҫлӗ ҫын мӗскӗн ӗнтӗ вӑл.

Çынсемшĕн пурăнакан чăваш ухмах ĕнтĕ вăл.
Хăй нихăçан та ырă туман çын
Ăçтан ĕнтĕ вăл чăваш ырă тунине ĕнентĕр?
Чăваша хурлакансене ман çапла калас килет:
Хăвăр çине çаврăнса пăхма вăхăт.
Эсир каланисем чăвашра мар, хăвăрта!
Тĕнче вăл тĕкĕр. Мĕнле пăхатăн – çавна куратăн.
Эх, мăнтарăн хурлавçăсем, асăрхамарăр та
Чăваша çапла сутса япăхлантăр.
Кам умĕнче ырă кутлă пулас терĕр-ха?

* * *

Çумăр пекех çырма пĕлесчĕ
Çĕре тумламăн шăварса.
Çырма пекех пĕрре кĕрлесчĕ
Куçран куççулĕ кăларса.

Ăт, çырнă ку, тесе калаччĕр,
Çемçе çĕрпе те утнăçем.
Çырма патне çитсен аптраччĕр,
Сиксе каçма та çук тесе.

Çумăр пекрех халь ман çырасчĕ,
Çемçен, вăрахăн, каниччен...
Кайран вара пĕтсе каясчĕ,
Хĕвел те тухтăр эп пĕтсен...

Хĕвел çинче вара вылятăр
Тумлам пек çырнă пин сăмах.
Сар кайăк та хăй май юрлатăр

Эп çырнине ирпе пĕрмай!

Ăт, çавăн чух вара лăпланăп,
Умри пĕр тĕкĕр пек пулса.
Эп пĕлĕтри пек пурăнатăп,
Çĕре те кĕрĕп сăрхăнса.

Унтан вара, каллех, куратăр,
Шăтса тухатăп курăк пек.
Ĕне те сурăх шăтăр-шатăр!
Çисе çӳретĕр кунĕпе...

Халăх çавна курса калатăр,
Çумăр çусассăн çĕр çине
Чăвашăнне пĕр уямасăр
Ĕни çиет мĕн çырнине!

* * *

Çутă-çутă кӳлленчĕк –
Ӳпĕнтернĕ тĕнче.
Пурте питĕ киленчĕк,
Пурте хăй килĕнче.
Сар хĕвел куçа-куçăн,
Çут тумлам пĕлĕтре.
Пĕлĕтрен вĕçсе анчĕ
Пăрчăкан çак тĕле.
Çумăрпа вăл вылянчĕ
Курчĕ ик хĕвеле.
Ма вара эс кулянчăк?
Ху та пăх ӳпĕнсе.

* * *

Тĕнче тăршшĕ сурпан сарнă пулăттăм.
Пĕр çав çулпа утнă пулăттăм.
Утсан-утсан уя тухнă пулăттăм...

Уй варринче пур пĕр ват юман.
Кам кăна пуль пырса пуç тайман?
Мĕнле кăна çын йĕр хăварман?

* * *

Куçа курăнман тĕнче?
Пурах-ши вара çĕр çинче
Вăраххăн ӳсет сар чечек.
Ӳссе те çитсен, кам пĕлет,
Тĕнче тăрăх вăл та вĕçет?

* * *

Юман çумĕнче эпир иккĕн.
Туятпăр, чунсем – ирĕклĕ.
Юман тăрăх чун, пĕлтĕм,
Мĕн-ма хăпарса, тет, ĕлĕк...
Чи çӳллĕ, хăватлă йывăç...
Ăна пуç çапма эпир тивĕç!..
Тӳпе чăнласах унăн ашшĕ,
Турат тăсăлать уй тăршшĕ!
Ак, эпĕ, тем пулчĕ, калăн,
Юман çине вĕçрĕм кайăкăн.
Юманĕ тăрать питĕ çирĕп,
Унран уйрăлма вăхăт çитрĕ.
Эс куртăн, çӳлте çуттăн
Пĕччен çеç вĕçет пĕр çулçă.
Вăл чунăм ман пулчĕ. Юманăн
Халь пур пек унта хăвачĕ.

* * *

Çулçăсем «вĕçсе» килчĕç каллех.
Кайăксем пуль вĕсем, чăннипех!
Пăхкалаççĕ кăна çил çинче.
Пĕр йăва туса хучĕç пулех!
Çаврака çеç пĕр пĕчĕк йăва –

Кĕрсе лар та хăть чĕпĕ кăлар!
Сан тавра çаврăнать çут тĕнче.
Эс ларатăн халь ун варринче.
Тӳпере çап-çара туратсем.
Халь мĕне-ха тĕллерĕç вĕсем?
Сулланса та шыраççĕ темскер,
Тен, çыраççĕ вĕсем çырусем?
Çулçăсем вара... çав çырусем!
Çырса хунă пулас темĕскер.
Вуласан та ăсланнăн пулан,
Вуламасăн та – ним те мар!
Лар кăна çавракa варринче,
Пăхкала ăншăрт çапнă пекрех.
Çулçăсем «вĕçсе» килчĕç каллех –
Çуркунне пуль чунра, чăннипе!

* * *

Çутă мĕлкеллĕ пĕр çул
Пурччĕ тахçан... Каç çинче
Вăл курăнатчĕ темле
Хитре шăтăкла çиттилле.
Эсĕ те пурччĕ унта –
Çав шăтăкла çыхакан.
Халĕ пăхап та утса,
Çутă курап тăршшипе.
Пулнă вĕт ху шăтăкла...
Кăмăллă пулнă тата!
Тен, çавăнпа шăтăкла
Çыхнă чуна тытмалла?
Çав шăтăкла çыххисем,
Сăмах каласа тунисем,
Халĕ те пуль татăлман,
Куç умĕнчен çухалман...
Икĕ мĕлке çул çинче
Халĕ те пулĕ пĕтмен.

Пӳрне вĕçĕнчи тĕнче
Çырнă пек тухрĕ ĕлккен.

* * *

Тĕлĕнмелле хĕрсем çуратнă
Хура тăлаллă маткасем.
Хăва пекех çинçе ураллă
Пулса, тет, шурă урасем,
Тăллисене хыт сырнăран.
Майран пекех кăшт шурăрах та
Майран пекрех кăпăшкăрах
Пулас тесе вара тем чухлĕ
Вăйне пĕтернĕ пулмалла?..
Халь тин вара çук çăпати те,
Халь курăнмасть хура тăлли.
Таçта çапса хăварнă пулĕ,
Таçта выртать пуль çĕрĕшсе?..
Çав çăпата çухалчĕ пуль çав,
Вăл ниепле те килеймест.
Тăпра шăрши кĕрсе юлсан çеç
Юлать асра ĕмĕрлĕхе...
Тен, хывмалла та марччĕ пулĕ,
Çав шур çыруллă пушмака?
Унпа вĕт пурăнма аванччĕ,
Çил пек пит çăмăл ташлама...
Тĕлĕнмелле хĕрсем çӳреççĕ
Таканлă çутă атăпа.
Çук, çăпата мĕнне пĕлмеççĕ,
Пĕлмеççĕ пуль чăн çын пулма?

* * *

Кĕтрет пекех халь килсе тухрĕ
Сана курни çак çул çинче.
Епле хитре иккен çын çулĕ,
Ӳксессĕн çын çути пите.

Çутă ӳксен вĕт тин ăнлантăм
Тĕнче тĕпне мĕн хунине.
Унта выртать шевле пек вăйлă
Çап-çутă савăнăç çиçсе.
Таса çут савăнăç тăвать-мĕн
Çак тĕнчери пур пурнăçа.
Çавна çутса килме пултартăн
Ман чун çине пĕр кунхине.

* * *

Мĕн пулнă-ши, тесе çӳреттĕм,
Аран-аран ураланса.
Кама тĕл пулнă – пĕтереттĕм
Вăрçса, хăртса та хурласа...
Сап-сарă вăрмана кĕрсен те
Туймастăм эпĕ канлĕхе.
Сап-сарă çулçă вĕлл! вĕçсен те
Вĕçсе каяс килместь пĕрле...
Ак, халь тем пулчĕ, кам пĕлет-ши
Мĕн пулнине çак тĕнчере?
Ака чухне çапла пулсаччĕ
Манпа кĕрхи йĕтем çинче.
Пит ывăнса çитсеччĕ эпĕ,
Апат та, ас тăвап, çимен...
Кайса ӳкес патне çитсессĕн,
Кулса çеç ятăм киленсе...

* * *

Уçлăха мĕнрен тунă тесен,
Илтме пулĕ темле тĕшмĕше те.
Пĕри калĕ – чул та тăпра...
Тепри калĕ – таса сывлăшран.
Эп вара тин кăна ăнлантăм,
Эп шутлатăп пачах урăхла.
Тĕнчене тунă чух телейĕн

Пĕр пайне хушса хунă унта!
Вăл вара, çĕпре хушнă пекех
Хăпартма тытăнать çак çĕре.
Тăпрапа тăмлă шывлă çĕрте
Шур чустан хăпарса йӳçсе...
Тутлă-тутлă сап-сарă çăкăр
Пиçсе тухнă пекех вучахран,
Сар хĕвел çинче хăвăрт пиçнĕ
Тăпра пичĕ хура уçлăхра.
Çавăнпа, асăрхарăр, акă,
Кайса выртрăн пулсан çĕр çине,
Эс хăвна туйса илтĕн телейлĕ,
Телейрен çăрса тунă çĕрте.

* * *

Ак çитрĕ çуркунне. Пахча шап-шурă.
Каллех юрлать пек шăпчăк пахчара.
Пурнăçăмра пĕр юрату çеç пултăр,
Мана тек ним те кирлĕ мар вара...

Каçсем те иртĕç, иртрĕ çамрăк вăхăт.
Тĕл пулусем те тухрĕç манăçа.
Пурнăçăмра пĕр юрату çеç пултăр,
Мана тек ним те кирлĕ мар вара.

Пĕр савăнса, пĕр хурланса та куртăм,
Чылай ас тиврĕм хурапа шурра.
Пурнăçăмра пĕр юрату çеç пултăр,
Мана тек ним те кирлĕ мар вара.

** *

Юр çурĕ те каллех тĕнче
Халь хăй те çутă кĕленче.
Утса-утса та пынă чух
Шуса ӳкме пулать вĕт шух!

Ура ярса пусмассерен,
Çак тӗнчере пурнас-тăк, тăр.
Вара тек хур курмастăн-тăр?
Ӗнер каçпа тӗнче хураччӗ,
Утакана ура хуратчӗ...
Паян та çавăн пек пулас,
Апла пулсан асăрханас!
Ах, турă, тет! Ăçта унта,
Шуса кайсассăн урапа?..
Кайса ӳкетӗн шапалла!
Шур юр çинче шăпа хăех,
Шăнса каять шăна пекех.
Сиксе тăрсассăн, юр çинче
Куçа курнать пӗр кӗлетке.
Çапла тухатрӗ ку тӗнче –
Вăл хăй те халӗ кӗленче!

* * *

Аякран-аякран, эп пӗлместӗп ăçтан,
Тен, чунран, курăк пек, тăпраран
Шăтарса та тухайрӗ пӗр сас –
Хирӗç халь çав сасса мӗн калас?

Нихăçан манмасла çавă сас яра кун
Янăрать ӗнтӗ халь хăлхара.
Кăларса пăрахсан та, мӗн тусан та
Хăтăлас çук унран нихăçан.

Юрату пуль çав сас, е, тен, вилӗм сасси,
Кӗтсе илӗ-ха, тет... Мӗн кӗтни?
Сасăпа кăна мар, шăплăхпа та
Çаврăнса та килет тепӗр чух.

Акă, килчӗ те вăл, халӗ вăл ман умра.
Кӗмӗл саслă шăнкăравлă ача.

Куçĕнче ик улма – хăй пĕр сăпас...
Шăлĕсем кулнă чух шăнкăрав!

Çывăхра-çывăхра, халь пĕлместĕп ăçтан,
Тен, чунран, курăк пек, тăпраран...
Шăтарса та тухайрĕ пĕр сас,
Хирĕç халь çав сасса мĕн калас?

* * *

Хĕл çитрĕ тени, мĕн тени?
Мĕнле хĕрлĕ питлĕ, тесе калани!
Пуçа та куçа çилтен пытарни,
Юр шатăр та шатăр туса кăтартни.

Хĕл çитрĕ тени, мĕн тени?
Чуна темле савăк килни!
Вара темĕнрен ача пек хăрани,
Ура утнăçем, пăр евĕр шăнни,
Утса та çитеслĕн киле талпăнни.

Хĕл çитрĕ тени, мĕн тени?
Хĕле хатĕрленнĕ, аптрамăп тени!
Виç уйăх пире пĕтереймĕ тени,
Чĕре майĕпен пĕтĕмпех лăпланни.
Халь хам та хĕл майлă пулни!

* * *

Пĕр кун маларах пăхса пытăм.
Мĕн пулĕ-ши, тетĕп ыран?
Илтетĕп, таçта питĕ хыттăн
Çапать темĕн пысăкăш чан.

Кама систерсе сас паратăн,
Шăпам çинчен мĕн-ха калан?
Кукук евĕр, тен, эс шутлатăн,

Ман юлнӑ куна палӑртан.

Ҫук, нимӗн мана каламарӗ,
Хуран евӗр пысӑкӑш чан.
Тӑн-тӑн та тӑн танлатрӗ
Чӑнах темӗскер ӑнсӑртран.

Шӑпа сассинчен хӑрамастӑп,
Эп хам та чан пек сас парап.
Мӗн пур – ырана хӑвармастӑп
Тӑватӑп паян – ҫак самант!

* * *
Кӗвӗллӗ уҫӑ шыратӑп
Ҫак тӗнчене уҫма.
Хам та ача пек пыратӑп,
Пӗр мечӗк ҫапса урапа...

Анчах та тӗнче вӑйӑ мар-тӑр,
Пурнӑҫӑм сцена мар.
Такам ахалех каланӑ –
Эпӗ артист мар!

Пӗрех темӗскер шыратӑп,
Ҫак пурнӑҫра куҫ тулли.
Ҫак кӗвӗре, тен, тупатӑп
Чун уҫҫине хам валли.

Чуна хамӑнне уҫсассӑн,
Тӗнче те вара уҫӑлать.
Эпир те кунтан кайсассӑн,
Сире валли вырӑн юлать.

Кӗвӗллӗ уҫӑ шыратӑп,
Ҫынпа уҫӑрах пулса...

Тен, эпĕ телей куратăп,
Çакă юрра юрласа?

* * *

Эсир куççуллĕ çĕршывра
Пулса курман-тăр-ха.
Ача чухне те макăрман,
Ӳссе çитсен те тарăхман...
Апла, куççуллĕ çĕршывра
Эсир пулман-тăр-ха.
Шăпăртатсах юхса анать,
Чарас тесен те чарăнмасть.
Аллупала кăна шăлатăн,
Тутăрпала усă курмастăн,
Аллу та йĕпенет вара.
Куççуль кăна йĕри-тавра...
Кун пек хĕн-хурлă çĕршывра
Çынсем те курăнаççĕ, ак,
Кукăрăлса, мăкăрăлса...
Е пăхнăçем куççулленсе
Юхсах каяççĕ таçталла...
Тута хăех темскер калать.
Ăшран та тухнă сăмахсем,
Вĕсем те пулĕ куççулленчĕç,
Тем урăхла илтĕнкелерĕç.
Темле унта ӳпкелешӳ те,
Тен, хăйне майлă килĕшӳ те...
Ăна халь ĕнтĕ мур пĕлет,
Куççульпеле, тен, тур килет?
Çук, çук, ун пек те май килмест,
Куççульпелех тĕнче пĕтмест.
Кăштах пулин те ляпланасчĕ,
Хаваслăрах кăштах пăхасчĕ...
Алла илес пекех эп тăтăм,
Анчах та турă килĕшмерĕ.

Чун хӳхлевне те чараймарӗ.
Тен, эпӗ хам та ҫӗнеймерӗм.
Ак, ҫавӑнпа та халь пӗччен.
Йӗрес пекех чуна кичем.
Тен, эпӗ те йӗрсе яраслӑн,
Куҫ ҫулӗсем те пӗрлешсессӗн,
Тӗнче те ҫутӑрах пулать,
Тута та пӗр пулса кулать?
Анчах та пурнӑҫ вӑл усал,
Куҫҫулӗ хыҫҫӑн йӑлл! кулсан,
Тухаҫҫӗ урӑх сӑмахсем.
Ытла та сиввӗн шӑл ҫинче...
Таҫта ларса пуль каштара?
Ак, халь вара вӗҫсе те тухрӗҫ,
Мана та шыраса ак тупрӗҫ.
Ҫук, пуля мар та, пурпӗрех,
Ытла хыт шӑтараҫҫӗ-ҫке!
Халь ху салтак пек вырт та вил!
Куҫҫуль тухасчӗ пӗреххут!
Куҫҫулӗ те... Пуш хир пек чун.
Пӗр сас та хирӗҫ кӑлармарӗ.
Хӑйне пӑхма та, ҫук, чармарӗ,
Чӑтан-ха, терӗ. Тепӗр чух
Кунран пин хут та хытӑрах
Чуна тивет чулпа ҫапни пек
Туссем сана улталани...
Паян та ҫавӑн пек пулать.
Тута ҫавна пӗлсе кулать.

* * *

Тӗтреллӗ уй, тӗтреллӗ пурнӑҫ
Ӑҫта ҫитерчӗҫ, хӑш тӗле?
Тӗтре прӗмай ҫӗре ҫеҫ ҫурӗ,
Пӗлмерӗ пӗлӗт мӗнлине...

Уй тăрăх эпĕ лăпкăн утрăм,
Шырарăм пурнăç никĕсне.
Таçтан çӳлтен çеç лăпкăн çурĕ
Тĕтре. каларĕ тупсăмне...

Каларĕ те, чăн пурнăç килчĕ,
Хĕвел пек тухрĕ майĕпен.
Вăл пăхнăçем телейĕм çитрĕ,
Уй урлă лăпкăн утнăçем...

* * *

Мĕн пулса иртнишĕн эп явапла мар.
Явăллă çак пурнăç хăй çапла тăвать.
Пĕр пĕрне халь ĕнтĕ уямастпăр та,
Явăл хăй кунне пуль уявлать.
Çавăнпа та тухрĕ ик куçран куççуль.
Эсĕ пуль шутларăн, ну, усал ку çын.
Темĕн чул халь ĕнтĕ каласан та пуль
Эсĕ ĕненместĕн, айăплатăн та...
Эпĕ мĕн каларăм, вăйлă, терĕм, чун.
Хурланса лармалăх вăхăт çукка та!
Эсĕ вара, куртăм, пĕр кĕтмен çĕртен
Макăрса та ятăн. Мĕн тăвас халь тин?
Алă, туртăнасчĕ! Ачашлас кăштах,
Кăмăл, хĕрхенмелĕх, пурччĕ-ха татах.
Ах, анчах вăл пулчĕ тата пысăкрах
Маннинчен çĕр хут та. Çапла пултăрах!
Ачашпа çĕкленнĕ алă уссăрах
Халĕ ак выртать-ха ман çумрах.
Эпĕ тек пĕлмерĕм ним те калама.
Эсĕ чарăнмарăн куççуль юхтарма.
Эсĕ мĕн пит вăйсăр, пит черчен чуну.
Тахçанах кĕтет мĕн ярăнма чуччу.
Ярăнас килет çав лайăх пурнăçра!
Пурнăçĕ халь ĕнтĕ, ху курса тăран.

Урама тухма та каçпала хăран...

* * *

Тĕлĕнетĕп хитре тĕнчерен.
Хăш чухне вăл чăн та питĕ тĕссĕр.
Хĕрхенсе çӳретĕн чĕререн,
Эс шутлатăн, мĕншĕн-ха вăл хĕсĕр?
Мĕн тума вара мана валли
Кун йышши пĕр тĕссĕр çут çанталăк?
Хура тĕс ахаль те чун тулли.
Эс пул чуна кăшт çутатмалăх.
Çитĕ-ха, тесе эс калăн та,
Çитĕ-ха çап-çутă нарăс кунĕ.
Ун чухне тапранĕ чунунта
Авалтан упраннă халăх юнĕ.
Хĕвеле пуç çапăн та, ара,
Тепĕр хут тĕнче каллех тĕсленĕ.
Турă панă çутă хăвата
Чăвашсем çапла тет хисепленĕ.
Тĕлĕнетĕп тĕссĕр тĕнчерен.
Хăш чухне вăл чăн та питĕ тĕссĕр!
Тимлеме пĕлсессĕн чĕререн
Пулмĕ вăл тек нихăçан та хĕсĕр.

* * *

Халь-халь качча каяслăн
Хĕл хăй те вăтанать.
Халь-халь йĕрсе яраслăн
Çур кунĕ пуçланать.
Кĕтсе илме тухсассăн,
Кĕтме пит йывăр çав.
Çурхи кунра пĕр сассăр
Пĕр юрă янăрать.
Ăна никам та халĕ
Илтмест те пуль чăнах.

Янрать, янрать çĕр саслăн,
Савни юрри пекрех.
Кам юратма пĕлет-тĕк,
Çавна вĕт илтетех.
Халь-халь качча каяслăн
Хĕл хĕр пекех ларать.
Тен, çавăнпа хаваслăн
Тĕнче те халь тăрать?
Каях, каях хĕр пуçăн
Мĕн-ма тет лармалла?
Пулать чуну та пурçăн
Качча кайсан кăна!

* * *

Кĕвентеллĕ пĕр хĕр пек тăратăн эс халĕ.
Ма илмерĕ-ха, тетĕн, хăй патне уйăхпи?
Эп ăна пулнă пулăттăм çывăх юлташ...
Кам пĕлет, тен, чăнах та, çапла хĕр шăпи?

Уйăхпин эп утап, шурă юр шăтăр-шатăр.
Ман хыçран çул амакĕ тухать, эп курап.
Эп унран пурпĕрех вĕт-ха, çук, хăрамастăп.
Çул çинче манăн чун ыррине çеç шырать.

* * *

Тĕнче çывăрать... Эпĕ те...
Аван мĕн çапла пурăнма,
Пĕр вĕçĕмсĕр çывăрма...
Вăхăт питех те тутлă!
Ниçта васкамасăр кĕрт пек
Килчĕ те выртрĕ...
Тата юр пекех кăпăшка,

Хăех вĕт ӳкет те çупăрлать...
Вара урăх мĕн. Ним те мар,
Мана тĕнчере кирлĕ мар.

* * *

Шартлама сивĕ кун
Çын çухатрĕ пĕр чун.
Тĕл пуласчĕ ăна çул çинче!
Эсир курнă пулех çын пекрех пĕр мĕлке.
Пуçне чикнĕ пырать. Пĕр çĕлĕк кăна
Ларса юлнă пулас хулпуççийĕ çине?
Чĕрĕп пек хутланать, ал-ури кукăр-макăр...
Чăваш чунĕ пулех хуçăлса пырса кĕчĕ?
Çав анчах çул тăршши пĕрмаях питĕ йĕчĕ.
Сассине, çук илтмерĕ пуль урăх пĕр çын та,
Тĕл пулсан, пĕр этем те, мĕн пулчĕ те-мерĕ.
Лучăрканнă хут пек çул çинче вĕçкелерĕ,
Тен, пытанчĕ те пуль, кĕрт айне кĕрсе выртрĕ...
Пурпĕрех вăл йĕни чĕрене кĕрсе юлчĕ.

* * *

Ăçтан тупатăн пурăнмалăх?
Тăпра та вĕт çумра юлман!
Пĕрех эс çӳлеллех ӳсетĕн –
Юман пекех вĕт курăнан!
Эс йывăçах-ха, питĕ симĕс,
Тачка та сарлака туна...
Такам кусне те савăнтарĕ
Йывăç ӳсни çак пахчара.
Сана пырса кăштах шăварăп,

Эс йывăç вĕт-ха, шыв ачи.
Хам кăмăла парса хăварăп,
Тен, эс те парăн сулхăнна?
Кашни кунах пăхса ларатăн
Эп çырнине, ĕçленине...
Эс чăннипех вăйна паратăн,
Çивĕчлетен сăмахсене...
Тен, сывлăп та, сан пек эп пурнăп
Пĕр тăпрапа, пĕр сывлăшпа...
Тен, çилсĕрех сан пек ал çупăп,
Çын çумнерех пулас тесе...

## Шухăшлă ӳкерчĕксем

Куç хӳрипе кăштах вылятрĕ
Пĕр хĕрачи ман çумăмра –
Хитре тăвас пек тĕнчене!

* * *

Хĕвел анать. Пит çăмарти
Кăшт хĕрелсе каять.
Юрлас килет.

* * *

Шур çăварнийĕн çăмарти
Выртать-ха шап-шурах –
Ман чун вара тем шиплетет.

* * *

Юр ирĕлмест-ха. Шап-шурах.
Хĕвел вара хĕртет.
Чун – ирĕлет.

* * *

Ирхи юр кăпăшка.

Хӗвел ачашланать манпа.
Ман йӗр юлать халь юр ҫинче.

* * *

Симӗс курӑк хӗвел ҫинче.
Куҫа ҫиет.

* * *

Хӗвел пӑхать.
Асфальт кӑшт тухнӑ пек пулать.
Пурнас килет.

* * *

Юр вӑтанать хӗвел ҫинче.
Хӗр куҫӗ пек ҫиҫет.

* * *

Ах, ҫуркунне, хӑйӗн айне
Кӑвайт чӗртсе хурать.
Мӗн вилнӗ – вӑранать!

* * *

Эрех пуль вырӑс юнӗ...
Ӗҫрӗн те – юрлатӑн вырӑсла.

* * *

Юр айӗнчен ҫуралнӑ курӑк
Ача пекех выртать.

* * *

Пӗрремӗш чечексем
Тӗнче пекех черчен.

* * *

Юр айӗнчен тухрӗ ят.

Эсӗ ӑна юрат!

* * *

Ҫурхи тӳпе пӗлӗтленнӗ.
Ҫумӑр ҫӑвать.
Фиалкӑсем тухнӑ ҫумӑр курма.

* * *

Чупса тухрӗҫ хӗвел чӗпписем
Амӑшне курма ҫаран ҫине.

* * *

Ман ҫул умӗнчи
Тополь пӗлӗтре!

* * *

Хӗл ыйхинчен вӑраннӑ тополь –
Кӑчкӑ хӗрелет.

* * *

Юрату, пӑр кайсан,
Шыв пекех юхса килет.

* * *

Чӑваш радио калать:
«Ҫумӑр ҫусан та ҫумасан та пултарать»
Мӗнле пурӑнмалла,тет, халь?

* * *

Хӗвел мана валли те пур-мӗн!
Тӗнче ҫуталчӗ – чунӑм ҫуталсан.

* * *

Чупса тухрӗҫ чечексем
Чун хӗрне ҫити –

Апла, пĕтмен-ха ку тĕнче.

* * *

Шурă сурăх пек
Симĕс курăк çинче йăваланчĕ –
Юлашки юр купи.

* * *

Хăрах куçпа пулсан та куртăм
Каç пек кăвак чечексене –
Тӳпе те усăлчĕ тепре.

* * *

Юрату сăмахĕ пурччĕ пăр çинче.
Пăр ирĕлчĕ.
Мĕн çырнă йĕр çухалчĕ.

* * *

Хĕр кăкри пек шурă хурăн тăрри.
Хăмăрланчĕ.
Тĕнче тăрланчĕ.

* * *

Чи хитре чечекрен те хитри
Хĕрупраçăн сăн-сăпачĕ –
Чăн тĕнче çавăн пек пулас?

* * *

Папкине кăларчĕ симĕс хĕвел пек.
Шикленмест нимрен те шурă тополь тек.

* * *

Çын тени тĕнче çутатать.
Чăн тени çутăран пуçланать.

* * *

Сарă-симĕс лĕпĕш тухнă
Пуçласа хĕвел çине –
Вăл пĕлмест хăй вилнине!

* * *

Ху кĕвĕçмесен,
Çын кĕвĕçни ним те мар –
Тĕнче кĕвĕçме пĕлмест.

* * *

Çĕртен тухнă.
Çĕрех кĕретпĕр.
Мĕн пурăнни? –
Çĕр пурăнтăр!

* * *

Çулçă куçлă çĕр
Ассăн çеç сывларĕ –
Тайăлса та илчĕç йывăçсем.

* * *

Çурхи шывсем çиййĕн
Шур чарлан вĕçет.
Вăл çырать пуль халĕ паллă мар ята?

* * *

Вĕт туратлă хурăн
Кăтартать пит вăрттăн
Пĕр тĕнче.

* * *

Арçынпа хĕрарăм,
Амăшпе ачи –
Чи хитри!

* * *

Аслашшӗпе мăнукӗ –
Икӗ пӗр тӗнче!

* * *

Хӗвел ăшши мунча пекех
Ытла çемçенӗн ачашлать –
Мунча кӗрес килет.

* * *

Ӗнер эп кăшкăртăм и-ях!
Паян пӗр сассăр тăтăм –
Çӗн кӗнеке ман алăра.

* * *

Çӗнтерес пек тӗнче шавне
Кăсăя йыхăрать хăй тусне –
Улмуççи хатӗрлет папкине.

* * *

Çепӗç çеçпӗл çеçки,
Ман ачалăх палли –
Тути юлнă тута çине.

* * *

Пӗр кана пăхса ларатăп
Кăткăсем çине.
Кăткăра кăна куратăп
Пурнăç мӗнлине.

* * *

Мăйăрлă çул килет пуль.
Шӗшкӗ çеçкере.
Кӗтеп кӗркунне çитессе.

* * *

Тӳпене тӗреклнӗ юман
Выртать ҫӗр ҫинче каскан –
Пырса ларчӗ пӗр ҫын.

* * *

Хӑва хӗвел еннех ҫаврӑнса ларчӗ,
Папка кӑларчӗ –
Пыл хурчӗ сӗрлет.

* * *

Ҫуркунне ӑшшиллӗ
Вӑрман витӗр утрӑм –
Юр купи шур чечек пек выртать!

* * *

Хӗр тути пек уҫӑлать чечек.
Кӗтет пуль пыл хуртне –
Кӗтет тута...

* * *

Чун уҫӑлать сасартӑк ҫиҫӗм пек,
Кӗтни килсен –
Кӗтни кӗтретлӗ.

* * *

Час хускалать, час пуҫланать...
Ҫӗнӗ тӗнче тухать –
Пӗр утӑм тусанах!

* * *

Хурӑн турачӗ евӗр
Сан алӑ курӑнать –
Пурнӑҫ ҫилӗ ӑна чуп тӑвать.

* * *

Çерçи тем чĕрĕлтетрĕ,
Лĕпĕш вĕçет хитре –
Вăрманлă чиркӳре.

* * *

Сакăр вĕçлĕ сар чечек –
Чăваш чечекки.
Ман ума ӳссе ларнă.

* * *

Эпĕ тĕнче пăхакан кăна:
Куратăп, шур юр хушшинче
Шĕшкĕ çурать кĕрен çеçкине.

* * *

Сап-сар чĕпĕсем
Турат çине ларса тухнă –
Пĕр сассăр шиплетеççĕ.

* * *

Çеçпĕл карталанса тухнă.
Варринче пĕлтĕрхи çулçă.

* * *

Ăвăс кăтраланчĕ,
Хурăн кăчкăра –
Çуркунне пуçланчĕ
Чăн малтан сăртра.

* * *

Кăвак тӳпере тăр-тăри.
Турат хушшипе хĕвел пайăрки.
Вăрман варрипе çул...

* * *

Хĕрарăмра ачашлăх.
Арçынлăхра – вăй.

* * *

Хĕр пуçĕ евĕр кăтраланчĕ
Ту хĕрринчи тополь тăрри –
Хитре çӳçне ăш çил майлать.

* * *

Хурăн кăтрийĕ урăхла...
Çиле май тăсăлать.
Хĕр çивитти пекех.

* * *

Сар чечек те тухрĕ,
Татса ил тесех.
Татăн та – мĕн тăвăн?

* * *

Армак-чармак юманпа
Çил ачисем выляççĕ –
Армак-чармак тăваççĕ!

* * *

Ял симĕсленчĕ.
Йăмра çеçкере –
Кăшкăрать курак.

* * *

Вăрман хура тумлă...
Симĕс тумлă йăмра
Вăранать ман чунра!

* * *

Юнаса тăрать юман
Çулçă кăларасшăн.
Çумăр çукалать.

* * *

Курак курăкпа туслă.
Тем курать, тем сăхать, тăрмалать...
Курак тĕнчине шырать.

* * *

Лаша кăшкарĕ тутлă...
Татсан, тымар юлать,
Кăшкар татах пулать.

* * *

Тĕлĕнмелле тĕлленчĕклĕ тĕнче
Тăп-тăрă тӳпере тĕрĕлтетет –
Хĕр витĕр пăх, татах хитреленет.

* * *

Эпир кайăпăр çак тĕнчерен,
Ырлăхĕ юлтăр пиртен.

* * *

Ача куллийĕ пирĕнте çук мар,
Ача кулсассăн, эпĕр те çук мар.

* * *

Чиесем, улмуççи çеçкере,
Шăпчăк килчĕ килне –
Пуплеççĕ чăваш ачисем.

* * *

Пĕр пулăм тĕнчере,

Пĕр тăвăм.
Тусан – пулать!

* * *

Канлĕ чух кăна кун пур.
Кун пулсассăн чун та пур.
Канлĕх пĕтрĕ – пурнăç çук.
Пурнăç çук-тăк, чун та çук.

* * *

Кĕркунне çитрĕ пуль?
Çитрĕ çав...
Çулçă пухнă кĕтрет,
Куç кĕрет.

* * *

Пăхма çук çутă куçăм
Çутă куна пĕтĕмлетет.
Кун-çул пекех ман кукăр çулăм
Телей тĕлне пуль хăй пĕлет!

* * *

Тĕтреллĕ кун
Çемçелчĕ чун.
Çăвать тĕтре –
Чĕре тĕпне.

* * *

Хăрăк туратлă тĕнче
Кăшт хăратать чĕрене.
Çурт çумĕнчи улмуççин
Улми çĕр çинче.

* * *

Туртать хĕрача сигарет.
Вăрттăн. Чĕтренет.
Пĕр-икĕ сар çулçă пек.

* * *

Пĕтĕм чунри пахалăх
Çак çулçăран тухать.
Çӳл тӳпери çурла та
Сар çулçăна шырать.

* * *

Сар çулçăна шырарăм,
Пĕтĕм телейĕм унра –
Петĕм те антăм çĕре!

* * *

Çак тĕнчери пуянлăх
Кĕр кунĕ кăна палăрать –
Çур кунĕ вара çарататать!

* * *

Çынсен уттисем илемлĕ,
Илемлĕ-çке пурнăç утти –
Йывăçăн та пур утти!

* * *

Куçри юрă чунлăх евĕр
Уçăлать сĕм уçлăхра –
Çăлтăр саслă пулмалла!

* * *

Уçăлнă чух уçланкă
Чун уçăлать
Уçлăха тепĕр хут уçаслăн.

* * *

Пӗртен пӗр çул çеç юлнă.
Сар çулçă çулӗ
Кӗрхи каçа упрать.

* * *

Каç ытамлать.
Тараймăн!
Ак, йывăç та ытамӗнче
Кăшт тӗлӗрет пулас?

* * *

Тем йӳçет.
Таçта сӗрӗмленет инçет.
Пӗтет.

* * *

Шаккать çут çанталăк
Пӗр алăкран.
Пӳртре питӗ хăтлă – кӗртмеççӗ!

* * *

Кутне пăрса утаççӗ сар хӗрсем,
Хăйсем хӗрарăм пулнине пӗлеççӗ –
Илӗртеççӗ!

* * *

Чечексем те сӳнчӗç.
Каçсерен шăнтать.
Пӗртен пӗр сар сунчăк
Чечек пек тăрать.

* * *

Çын утать, утса тухмалăх

Çулĕ пур пулсассăн.
Пурнăç пурăнма хаваслă,
Хăвна ху тупсассăн.

* * *

Чӳрече янаххи çинче
Çын курман пĕр чечек.
Ун çеçкийĕ çулçи ăшĕнче,
Тӳпери хĕвел пек çиçет.

* * *

Арăма кĕтсе ларатăп
Хĕвел кĕтнĕ пек –
Тухрĕ ман хĕвел.

* * *

Çул çинче çутă çул уçăлать.
Паянтан çул турри пулăшать.

* * *

Паянтан манăн чун пурăнать.
Паянтан вăл хăйне кăтартать –
Хăй пурришĕн ытла савăнать.

* * *

Юрларăм тепĕр юрă,
Юрри пĕр çутă пек.
Манра пурах пĕр турă –
Çав турă юрă пек.

* * *

Килет-ши ман мăнукăм
Паян театра?
Театр хăй те тутлă –
Мăнукăм – тутлăрах!

* * *

Шур юр çинчи пĕр утăм.
Йĕрри пурнăç пекех.
Чун евĕрех çак пулăм,
Шур юр çĕре ӳксен.

* * *

Çĕнĕ çул çулĕсем
Шап-шур кĕртлĕ.
Чӳрече çутисем
Уйăх тĕслĕ.

Çутă уйăх çутат,
Çĕн çула такăрлат.
Эпир утнă çула
Ан çухат.

* * *

Мĕн хурланни иртсе каять
Ирхи тĕтре пек майĕпен пĕр сассăр –
Хĕвел тухсан.

* * *

Чун ма тепĕре хускалмарĕ?
Е вилнĕ пек турĕ те вăл,
Такам килессе кĕтсе выртрĕ
Çак пĕр юмахри тилĕ пек.

ТУПМАЛЛИ

1. Çурхи тĕнчере пур икĕ çанталăк....................3
2. Ирпе çут çанталăк вăраннă чухне..................4
3. Сап-сарă кĕркуннен йăлийĕ..............................5
4. Вĕлтĕр-вĕлтĕр вĕçет кĕрт çинчи
юр пĕрчи..............................................................5
5. Тӳпере те тинĕс пулĕ.........................................6
6. Пăрланнă хура уçлăхра пĕр планета.............6
7. Çу кунĕ кăçал сулхăнпа тулса килчĕ............7
8. Халĕ мана нимĕн те кирлĕ мар ĕнтĕ...........8
9. Пĕтрĕ çеçке çумăрпа тăкăнса.........................9
10. Çак тĕнчене – вилме çуралнă......................9
11. Ĕнтĕ каять тĕнче, тайăлать.........................10
12. Таçта аякра, тĕнчере, тахçанах...................10
13. Ман çăлтăр яланах çӳлте............................11
14. Пĕр хам тĕллĕн пĕрмай шухăшланă...........12
15. Пыраттăм эпĕ урампа..................................12
16. Эй, хула çыннисем, куртăр-и......................14
17. Тин-тин! тăватчĕ кайăк................................14
18. Ӳссе çитнĕ груша çеçке ăшĕнче..................15
19. Çурхи тӳпере, каçхи тӳпере........................15
20. Çӳлтен шăлса тăкнă çăлтăр тусанĕ.............16
21. Юр хывса кайнă çул....................................16
22. Пĕчиккĕ чухнех пулă тытнă çĕрте..............16
23. Сăвар çинчен хывнă юрă............................17
24. Чăвашăн пур пĕр чăн йăла.........................21
25. Уçăлса çӳрерĕм..............................................22
26. Эй, пулса пуль эп таçта та!.......................23
27. Хĕл тăршшипех кун сивĕ тăчĕ....................23
28. Эпир килнĕ пулас çăлтăр витĕр..................24
29. Тӳпере çутăран çутă уйăх...........................24
30. Тинех, ак, тупрăм канлĕх чунăмра.............25
31. Каллех ман кăкăра уçать-ха уçă сывлăш...26
32. Сар хĕвел анăçа анса ларчĕ........................26

33. Пушкинран куçарни....................................27
34. Чăваш ачи пирки шутлатăп.......................28
35. Кĕтетĕп эп...................................................28
36. Чăвашшăн ĕçлесе ун чунĕ тухрĕ................29
37. Юрларĕ вăл. Сассийĕ кайрĕ........................29
38. Ăшунта сан те Турă ларать.......................30
39. Чĕре темле хăратнă пĕчĕк кайăк евĕр.......30
40. Çулçă йăтнă хурăн пытарать пек хурлăх..30
41. Шурă хурăн тăрать дирижер пек...............31
42. Çулçă тăкнă шурă хурăнăн..........................32
43. Пĕр пĕчĕк кăна хӳшĕ тума тивет пулĕ......32
44. Икĕ çырма пуçĕ сăртлă та йывăçлă............34
45. Шурă-шурă пĕлĕт çӳлте................................35
46. Урам енчи чӳречерен пĕр ача пăхса ларать...........................................................................35
47. Такам таçтан, шалтан-шалтан......................37
48. Тĕнче пĕтет пуль тенĕ чух...........................37
49. Вăрмантан тухрăм, уй тăрăх утрăм............39
50. Уйăхран иртетĕп-ха тесеттĕм.......................39
51. Çутă кĕтме тытăнатăп...................................40
52. Чĕкеç пекех пулас тесе.................................41
53. Хĕрарăмсăр пĕр кун та çуккă.....................41
54. Тĕл пулса санпала хĕллехи тĕттĕм каç......42
55. Хĕвел ларать пакша пек.............................42
56. Эпир пĕчĕк чухне, ас тăватни, савни........43
57. Хĕрлĕ-хĕрлĕ, питĕ хĕрлĕ çулçă....................44
58. Килет пек вилĕм... Куçа вăл курăнмасть......................................................44
59. Ирпе эп пăхса пыратăп..............................45
60. Çап-çутă уйăх тӳпереччĕ.............................45
61. Пас тытнă йывăç пек хитре.......................46
62. Сана манса кайма май çук.........................46
63. Шурă ĕнтĕ тĕнче, питĕ шурă......................47
64. Мĕн калăн, тусăм, паянтан.........................47
65. Кĕр кунĕ куçне уçса пăхрĕ........................48

66. Ешĕл çулçă тĕнче куçлать...........................48
67. Çĕр çинче музăсем нумай...........................49
68. Симĕс курăк сырса илнĕ............................49
69. Элли итлерĕ Вольфганг кĕввине..................50
70. Вăрманти пĕр каска çинче...........................51
71. Кияк тăвать текерлĕк..................................51
72. Утă вăхчи... Хĕвел çинче.............................52
73. Тахçантанпах çырманччĕ эпĕ........................52
74. Темле пĕр хӳхĕмлĕх. тасалăх........................53
75. Мĕн хурлăхлăн пăхса ларатăн.....................53
76. Мĕн кирлĕ пултăр çĕр çинче.......................54
77. Арăм ман çывăрать уйăх пек.......................55
78. Вĕтĕ-вĕтĕ хумлă çут çанталăк........................55
79. Вăрман витĕр тухрĕ....................................56
80. Мĕн кĕтетĕп эпĕ чечекрен............................56
81. Пил парать пилешĕм...................................57
82. Хресчен хĕрарăмĕ тесе.................................57
83. Икĕ тĕм юнашар.........................................58
84. Аса илсе ĕлĕкхине......................................59
85. Шкул чухнехи хăватлă-çке............................60
86. Кĕрхи чечеклĕ Хусанкай...............................60
87. Асамлă ачалăх...........................................61
88. Мĕнпур япала пурăнма тăрăшать...............61
89. Хитре çанталăк...........................................62
90. Тăраççĕ хурăнсем çурта пек........................62
91. Чив-чив! текен пĕр сасă...............................63
92. Кĕрхи çут çанталăк.....................................63
93. Пĕр çурт çумĕпе иртнĕ чухне.....................63
94. Пилеш ман пĕлĕт пек хитре........................64
95. Кĕрхи тулăх çырла тути.............................64
96. Каллех тухать пĕр çул ума.........................65
97. Нихçан та эпĕ шутламан............................65
98. Карталанать ирпе тĕтре..............................66
99. Паянхи пек пулман пулĕ ăмăр..................66
100. Кăвакарнă тĕнче шăвăнать майĕпен..........67

101. Шупашкарта каç пулса килет.....................67
102. Çаралчĕ вăрман. Пушанчĕç уйсем..............67
103. Пытанать хĕвелĕм.........................................68
104. Вăрттăн çеç кĕтесри пĕр чечек..................68
105. Утатпăр эпĕр кăптăр-каптăр........................69
106. Васкатать тĕнче, чуптарать.........................69
107. Сивĕ, сивĕ, сивĕ..............................................70
108. Çын пекех пăхать пит тимлĕн...................70
109. Пĕчĕк çеç пĕр йывăç.....................................71
110. Сивĕрен те сивĕ пурнăçра...........................71
111. Çĕр çинче çутăсем нумай............................72
112. Вăрман варринче............................................72
113. Симĕс чăрăш тăрринче................................72
114. Кăшт сывлать-ха манăн чăрăш..................73
115. Яковлев ячĕ паян...........................................73
116. Чунра питĕ лайăх паян.................................74
117. Пурнăçра урăх ним те çуккă. Çуккă!.......74
118. Шурă кĕрт çине пусса..................................75
119. Çын умĕнче чăн ухмахла.............................75
120. Кĕркунне килсе çитрĕ каллех......................76
121. Мĕн асăрхарăм пурнăçра?............................76
122. Çак тĕнче юратусăр пулман-тăр.................77
123. Ача чух анчах çав пуринчен аванччĕ.......77
124. Пулать тепĕр чух тĕл пулу пурнăçра.......78
125. Миçе çул ĕнтĕ нăйкăшмасăр.......................78
126. Телейлĕ тесе калаймăн.................................79
127. Ĕнер эпĕ лекрĕм таçта.................................79
128. Епле юратуллăн та ăслăн............................80
129. Такам çул хырса панă..................................80
130. Çĕнĕ çул чăнласах пуль çитрĕ...................80
131. Хура каç куçăма хуплать............................81
132. Ах, çулла, çуллаçăм......................................82
133. Каллех килет çуралнă кун сан...................82
134. Çак тулăхсăр вăрçлă кун.............................83
135. Пĕрле ларма чĕннĕ çанталăк......................84

136. Кун пек хисепре эпĕ пулманччĕ.................85
137. Çапла пуль, мĕн пултăр урăх.....................86
138. Пĕр пурнăçран тăратпăр эпĕр.....................86
139. Пĕрремĕш чечек, куртăр...............................88
140. Ай, кай, пурнăç иртет, пурнăç иртет........88
141. Тахçан ача чух, пĕр хуçнă турат...............89
142. Мăн асатте тахçан лартнă йăмра...............90
143. Шăпчăк тесен аса илетĕп............................91
144. Эп кая юлса пыратăп..................................91
145. Пĕлтĕрхи вăррине те тăкман-ха..................92
146. Хумлă-хумлă çĕр-сывлăш чĕтреннĕ чухне..93
147. Иккĕнтен тĕл пулчĕç....................................93
148. Ай! хăрушă иккен май уйăхĕ.....................94
149. Эпĕ нимĕн те, нимĕн те ăнланмастăп.......95
150. Çумăр пекех çырма пĕлесчĕ........................96
151. Çутă-çутă кӳлленчĕк.....................................97
152. Тĕнче тăршшĕ сурпан сарнă пулăтттăм....97
153. Куçа курăнман тĕнче...................................98
154. Юман çумĕнче эпир иккĕн..........................98
155. Çулçăсем «вĕçсе» килчĕç каллех.................98
156. Çутă мĕлкеллĕ пĕр çул...............................99
157. Тĕлĕнмелле хĕрсем çуратнă.......................100
158. Кĕтрет пекех халь килсе тухрĕ................100
159. Мĕн пулнă-ши тесе çӳреттĕм....................101
160. Уçлăха мĕнрен тунă тесен........................101
161. Ак çитрĕ çуркунне. Пахча шап-шурă......102
162. Юр çурĕ те каллех тĕнче..........................102
163. Аякран-аякран, эп пĕлместĕп ăçтан..........103
164. Хĕл çитрĕ тени, мĕн тени.........................104
165. Пĕр кун маларах пăхса пытăм.................104
166. Кĕвĕллĕ уçă шыратăп................................105
167. Эсир куççуллĕ çĕршывра...........................106
168. Тĕтреллĕ уй, тĕтреллĕ пурнăç...................107
169. Мĕн пулса иртнишĕн эп явaплă мар......108
170. Тĕлĕнетĕп хитре тĕнчерен.........................109

171. Халь-халь качча каяслăн............................109
172. Кĕвентеллĕ пĕр хĕр пек тăратăн
эс халĕ......................................................110
173. Тĕнче çывăрать... Эпĕ те...........................110
174. Шартлама сивĕ кун....................................111
175. Ăçтан тупатăн пурăнмалăх........................111
176. Шухăшлă ӳкерчĕксем............................112-126

**Желтов Михаил Павлович**

# ЧУН КЁНЕКИ

## *Книга души*

Стихи на чувашском языке

Печать принтерная
Формат 60x84
Гарнитура Times
Тираж 10 экз.
Самиздат «Семья»